Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ДЕКАБĔР 1
КĔСНЕРНИКУН
275 (5088) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. замеçтителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

I-XII—1934 Сергей Миронăвич Кирăва асăнса I-XII—1938

Аслă трибун тата паттăр револђуционер

1934 çулти декабĕрĕн 1-мĕшĕнче Сергей Миронăвич Кирăвăн çулăмлă чĕри тапма чарăнчĕ. Çав хуйхăлă кунран вара, пирĕн партин чи паллă дейатĕлĕсенчен пĕри пулнă, парти тата Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăхсем йуратса тăнă аслă, çулăмлă, паттăр револђуционер пурнăçне троцкисла-бухаринла фашисла ирсĕрсем предателле татса пăрахнă кунран вара пире тăватă çулталăк хушши вăхăт уйăрса тăрать. Мĕлйушар çынсем çав текех кайала таврăнма çук пысăк çухатушăн хыттăн тарăхса кулђанчĕç. Ирсĕр бандитсем аслă совет халăхне хирĕç, социалисăма хирĕç халиччен илтмен тискерле преступлени тунă пирки мĕлйушар çынсен чĕрисем тарăхса, вĕçĕ-хĕррисĕр хыттăн çиллеисе ÿкрĕç, тăшмана, курайманнипе тулса çитрĕç.

Халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла фашисла çĕлен-калтасем кам çине тĕллессине, кам çине ал çĕклессине пĕлнĕ. С. М. Кирăв аслă Сталинăн тĕрĕс соратникĕ, партин тĕп çулйĕрĕшĕн хастаррăн кĕрешекен, троцкиссене, зиновйĕвĕçсене, бухаринĕçсене, партин тата халăхăн çак пĕтĕм ылханлă тăшманĕсене, шпионсене, çынвĕлеренсене, диверсантсене, тăван çĕршыва сутакансене, фашисăм агентурине хайаррăн çĕмĕрсе ынă борец пулнă. Кирăв совет халăхĕн чи лайăхран та лайăх ывăлĕ, револђуцин аслă трибунĕ пулнă. Вăл хăйĕн пĕтĕм çуталса тăракан ăспуçне, болђшевикла чăплă организатăрăн пĕтĕм хăватлă талантне мĕн çамрăкранах пролетарилĕ револђуци ĕçне, социалисăм строитĕлстви ĕçне панă. Коммунисăмăн аслă идейисем çĕнтермеле тăвассишĕн, халăхăн ырă та телейлĕ пурнăçĕшĕн кĕрешессинчен пуçне урăхла шухăшсем, урăхла интерессем унăн пулман.

Сергей Миронăвич массăсен чаплă организатăрĕ пулнă. Вăл револђуцилĕ кĕрешĕвĕн пур тапхăрĕсенче те пирĕн парти пытанса ĕçленĕ чухне те,—вăл тапхăр пирĕн аслă парти пуçланса, ÿссе, пиçĕхсе пынă тапхăр пулнă,—Октйабĕрти Социалисăмлă Аслă револђуци кунĕсен тапхăрĕнче те, белогвардейĕçсемпе интервентсене хирĕç алла хĕçпăшал тытса кĕрешнĕ тапхăрта та, социалисăмлă гигантла стройкăсен тапхăрĕнче те йаланах малти ретсенче пулнă.

Кирăв чăн-чăн болђшевикла руководитĕл пулнă, вăл массăсен сассине тимлĕн итленĕ. Вăл руководствăн ленинла-сталинла стилне питĕ ăста пĕлнĕ, вăл умма лартнă тĕллев патне пырас, çынсене пĕлес, вĕсем çине сисĕмлĕхлĕ пулса пăхас йенĕпе болђшевикла организацилĕхĕн, çирĕплĕхĕн, хастарлăхăн тĕслĕхĕ пулнă.

С. М. Кирăва вĕлернипе ылханлă троцкисла-бухаринла бандă болђшевикçен речĕсене йĕркерен кăларма, рабочи клас диктатурине хавшатма, вăйсăрлатма, социалисăм çĕнтерÿлĕн малала пырассине чарса лартма ĕмĕтленнĕ. Анчах тăшмансен ĕçĕ тухаймарĕ. Кирăв йулташа вĕлерни пĕтĕм партине, пирĕн çĕршыври пĕтĕм ĕççыннисене — троцкиссем, бухаринĕçсем тара кĕрĕшнĕ шпионсен, диверсантсен, сăтăрçăсен, çынвĕлеренсен банди пулвине, фашисла разведкăсен чи тĕттĕм ĕçĕсене туса пыракан бандă пулнине кăтартрĕ. Пирĕн партипе совет халăхĕ фашиссен пытанса ĕçлекен троцкисла-бухаринла тата буржуалă националисла йувлă йытăсене, пирĕн çĕршывра тепĕр хут капиталисăм йĕрки туса хурас, пирĕн телейлĕ, ирĕклĕ халăха буржуалă-помешчиклĕ чуралăха кĕртсе ÿкерес тĕлĕшпе нимĕнле тискер ĕç умĕнче те чарăнса тăман тăшмансене тăрă шыв çине кăларчĕç.

Çак иртнĕ тăватă çулталăк хушшинче, тăшмансем Кирăв йулташа тискеррĕн вĕлернĕрен вара, пирĕн парти, Сталин йулташ йертсе пынипе, троцкисла-бухаринла тата буржуалă националисла фашисла çĕлен-калтасене çапса çĕмĕрчĕ, пирĕн чаплă наркомвнуделђĕçсем, сталинла нарком Йежов й. йертсе пынипе, халăх тăшманĕсен йăвисене çĕмĕрсе тăкрĕç, вĕсен халиччен нихăçан илтмен тĕлĕнмеле тискер айăплă ĕçĕсен çăмхине сÿтсе тăкрĕç. Сталин йулташ ПСК(б)П Тĕпкомĕн февралђ-мартри пленумĕнче капиталисăмла йĕритавралăх социалисăм çĕршывĕшĕн хăрушă йапала пулса тăни çинчен кăтартса панисенчен парти хăйне кирлĕ пур вывăдсене те тунă тата малашне те туса пырать.

„Капиталисăмла йĕритавралăх çине пирĕн мĕнле пăхмали çинчен Сталин йулташ кăтартса панисене ăнланса пурнăçа кĕртесси вăл—хамăрăн боевой позицисене пур тĕрлĕ клас тăшманĕсене те хирĕç çирĕплетессине пĕлтерет, ĕçе социалисăм пĕтĕмĕшпех çĕнтересси патне илсе пырассине пĕлтерет“ (В. Молотăв).

Парти совет халăхĕн политикăлă сыхăлăхне, револђуцилĕ сыхăлăхне, унăн идейăлă пĕлÿне хăпартассишĕн ырми-канми ĕçлет.

Пирĕн партин Тĕп Комитечĕ тата Сталин йулташ хăй тÿрех йертсе пынипе пирĕн Чăваш парторганизаци те Чăваш республикĕнче троцкисла-бухаринла тата буржуалă националисла бандăсене çĕмĕрсе тăкас йенĕпе пысăк ĕçсем туса иртерчĕ. Çак тасату ĕçĕ пĕтмен-ха. Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференцине çитиччен пекех партипе совет руководствинче ларнă усал тăшмансем социалисăм строитĕлствин пур участкисенче те хăйсен бандисене лартса пынă, вĕсене пур майсемпе те пытарса усранă. Çавăнпа та халăхăн пĕтĕм тăшманĕсене татăклăн тăпăлтарса кăларса пĕтересси—пирĕн Чăваш парторганизаципе ĕççыннисен вирлĕ задачĕ пулать.

Тăшмансем С. М. Кирăва вĕлернĕ пирки ПСК(б)П Тĕпкомĕ парти организацисем патне йанă çырура парти историне коммунистсем хушшинче вĕренес ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартма чĕнчĕ. Мĕншĕн тесен, пирĕн партин историне пĕлни тата ăнлании парти членĕсен револђуцилĕ сыхăлăхне пĕтĕмĕшпех тума кирлĕ пахаран та паха средствă пулать. Марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илес ĕçре пирĕн партире тăракан тата партире тăман кадрсене, совет интеллигенцине „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ“ пысăк пулăшу парать. Кашни болђшевикăн теорине вĕренсе алла илес ĕçре, ПСК(б)П историне вĕренес ĕçре хастарлă пулмала, ку тĕлĕшпе вĕсен Кирăв йулташран пример илмеле. Кирăв йулташ идейăлă воспитани ыйтăвĕсене йаланах малти вырăна хунă.

Тăшмансем Кирăв йулташа вĕлернĕрен вара иртнĕ тăватă çул хушшинче пирĕн çĕршыв халăх хуçалăхĕпе кулђтурă строитĕлствин пур отрăçлисенче те, çĕршывăн оборонă хăватне ÿстерес ĕçре те пысăк çитĕнÿсем турĕ. Пирĕн çĕршыв тата ытларах вăйлă та хăватлă çĕршыв пулса тăчĕ. Пире вăрçăпа çĕмĕрсе тăкма тăрăшакан империалисла государствăсем Хасан кÿлли патĕнчи çапăçусенче пысăк урок туйанчĕç. Пирĕн чаплă Хĕрлĕ Çар пирĕн никам тĕкĕнейми таса çĕре туртса илме хăтланса пăхнă Йапони самурайĕсене—йытăсене çĕмĕрмеле çапса хуçрĕ.

Сергей Миронăвич пирĕн кунсене, социалисăм пĕтĕмпех çĕнтерсе илнĕ, Совет çĕршывĕ чечеклесе çитнĕ кунсене çитиччен пурăнаймарĕ. Партипе халăх хăйсем йуратнă Кирăв йатне асра таса тытса тăраççĕ. Кирăв йачĕ çĕршер çулсем хушши пурăнĕ. Сергей Миронăвич Кирăв пурнăçĕпе кĕрешĕвĕнчи çуттăн курăнса тăракан примерсемпе хавхаланнă совет халăхĕ, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, Кирăв хăйĕн пĕтĕм пурнăçне панă ĕç татăкланах çĕнтермеле, халăхăн пур йышши тăшманĕсене те пĕтĕмпех пĕтерсе, коммунисăм çĕнтермеле тăвĕ.

Шÿкрÿ Сараджоглу Турципе Совет Сойузĕ хушшинчи хутшăнусем çинчен

АНКАРА, нойабĕрĕн 29-мĕш. Нойабĕрĕн 28-мĕшĕнче Турцин йут çĕршыв ĕçĕсен çĕнĕ министрĕ Шÿкрÿ Сараджоглу ТАСС корреспондентне йышăннă. ана Турципе Совет Сойузĕ хушшинчи хутшăнусем çинчен каланă.

Турцин çĕнĕ президенчĕ Исмет Иннеђу йут çĕршывсенчи прессăна каланинче, Турци правитĕлстви пур ĕçсенче те тата пуринчен ытларах тулашри политикăра кемалисăм принципĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пырать, тесе кăтартса панине паллă туса, министр малала çапла каланă:

„Пайан есĕр килнипе усă курса, епĕ сире тата сирĕн урлă Совет Сойузĕнчи общественнăçа çакна калатăп: Турцин тулашри политики Турципе Совет Сойузĕ хушшинчи хутшăнусемпе çыхăнса тăракан пур ĕçсенче те халиччен пекех, икĕ çĕршыв чĕререн килекен туслăхпа çыхăннăран вара мĕнле пулнă, çавăн пекех пулать. Епĕр кÿршĕри аслă çĕршывпа туслă пурăнни вăл—политикăри йачĕшĕн çеç тунă йапала мар. вăл пурнăçра чăн пур факт, вăл Турципе тата ССР Сойузĕпе çĕнĕ йĕрке туса иртнĕ пысăк событисенчен пуçланнă. Манăн çĕршывăн тулашри политики кăна мар, тата Турци халăхĕн тарăн туйăмĕсем те ССРС тĕлĕшпе нимĕн те улшăнман, çакна епĕ уйрăмах савăнса калатăп. Нумайах пулмасть çакăнта хамăрăн тахçанхи хаклă туса, паллă представитĕле, Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн замеçтитĕлĕ г. Потемкина йышăннă чух хамăрăн туслăха çĕнĕрен аса илнипе, халђ епĕ сире калаçнине тата тепĕр хут иккĕн паллă тунипе епĕр телейлĕ пултăмăр“.

—o—

Турцири хаçатсем Шÿкрÿ Сараджоглу калани çинчен

СТАМБУЛ, нойабĕрĕн 29-мĕш. Турцин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Шÿкрÿ Сараджоглу ТАСС корреспондентне каланă сăмахсене пайан Турцири пур хаçатсем те пичетлесе кăларнă. Хаçатсем Турципе Совет Сойузĕ хушшинчи хутшăнусем кисренми çирĕп тытăнса тănине паллă тăваççĕ.

—o—

Испанири фронтсенче

Левант фронтĕнче пăлхавçăсемпе интервентсем нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче Нулес районĕнче республиканĕçсен позицисем çине тапăнма хăтланса пăхнă. Пăлхавçăсен хăшпĕр часĕсем пралук картасене çĕмĕрсе, республиканĕçсемпе çапăçса, республиканĕçсен позицисене йышăнма та ĕлкĕрнĕ пулнă. Анчах та республикă çарĕсем пăлхавçăсене пысăк сийен кÿрсе кайала хăваласа йанă. Теруелрен 20 километр кăнтăр йеннеле фашиссен авиацийĕ йавăшпа хăйĕн позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Ытти фронтсенче урăх нимĕнле пысăк операцисем те пулман.

(ТАСС).

—o—

Германире йеврей халăхĕнчен мăшкăлаççĕ

Германире йеврей халăхне пурăнма куллен кун йăвăрланса пырать. Англи хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, концентрацилĕ лагĕрсенче, уйрăмăнах Бухенвалђдпа Заксенхаузенти концентрацилĕ лагĕрсенче йеврейсем валђђи тунă режим çав тери тискер. Лагĕрсене хупса хунă йеврейсене тискеррĕн асаплантараççĕ. Асапа тÿсеймесĕр йеврейсем нумай вилеççĕ.

Хĕнесе тата амантса пĕтернĕ йеврейсене кашни кунах Венăри пулђницăна илсе параççĕ. Анчах вĕсене унта та чăтма çук начар пăхаççĕ.

(ТАСС).

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Зверĕв художник тунă картинă „С. М. КИРĂВ“ (Ленинградри С. М. Кирăв музейĕнчи материалсем тăрăх).

Секке Йăнов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Сергей Миронăвич йачĕ йаланах пирĕн асра

Ача сатĕнчи октябрйонăкран пуçласа чи ватă асатте патне çитиччене Сергей Миронăвич Кирăв йатне пурте пĕлеççĕ. Епĕр, ĕççыннисем, çулăмлă трибун йатне чĕрере тытса, коммунисăм ĕçне малала тата хăватлăрах пусăмсемпе йарас ĕçшĕн кĕрешетпĕр. Совет халăхĕ çулсерен çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвать. Кашни çĕнтерÿре епĕр Кирăв сăнне куратпăр. Кирăвăн çулăмлă чĕри тапнине туйатпăр. Колхозсен уйхирĕсенче тракăр хăватлăн кĕрлет-и, йе уйхир карапĕ—комбайн пырать-и, тÿпе урлă хурçă самолђот вĕçсе каçать-и, ача сачĕсенчи телейлĕ совет ачисем йурлаççĕ-и—пур çĕрте те епĕр Мироныччăн уçă сассине илтетпĕр. Мĕншĕн тесен Кирăв хăйĕн пурнăçне пĕтĕм халăх ĕçĕшĕн панă. Ирсĕр тăшмансем Кирăва вĕлерсе пирĕн ĕçе аркататпăр, тесе шутларĕç. Анчах вĕсем кĕтни пулмарĕ. Кирăв тупăкĕ умĕнче шăмшакка хытарса, тăшмансене ылханса епĕр ĕмĕрлĕхех тупа турăмăр: ирсĕр тăшмансене пĕр тымар йулмиччен тăпăлтарăпăр, коммунисăма туса çитерĕпĕр!

Çулсерен декабĕрĕн 1-мĕш кунĕнче Сергей Миронăвич йатне асăннă чух епĕр хамăрăн вăйхăвата, хамăрăн политикăлă сыхăлăха тата ытларах тĕреклетсе вăйлăлататпăр. Епĕр, совет халăхĕ, совет çĕршывне никам çĕнтерейми хăватлăхне тата ытларах туйатпăр.

Иван Александрăв.
Орденоносĕç, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ.

Полђшăпа Совет Сойузĕ хушшинчи хутшăнусем çинчен йут çĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ

Литвинăв йулташ Полђшăн Мускаври посолĕ Гржибовскипе калаçнисен итогĕсем çинчен пĕлтерни йут çĕршывсенчи хаçатсем халђ те сÿтсе-йаваççĕ.

Францири хаçатсем: çак калаçусем Совет Сойузĕпе Полђшă пĕр-пĕрин патне çывхарма пуçланине пĕлтереççĕ, тесе кăтартса параççĕ. „Ордр“ хаçат çапла çырать: „Полђшăпа Мускав пĕр-пĕрин патне çывхарса пыраççĕ. Çак çывхаруна пуçараканĕ—Полђшă хăй. Çак ĕçре Парижра, халђ вăхăт пур чух, кирлĕ пек уроксем тусан аван пулнă пулĕччĕ“.

Англири хăшпĕр хаçатсем калаçусен итогĕсем пирки йатарласах умстатйасем çырса кăлараççĕ. „Таймс“ хаçат: „çак килĕшĕве туни фашиссем „Коминтерна хирĕçле пакта“ анлăлатма тăрăшнине чи пуçласа пысăк сийен кÿни пулса тăрать“, тесе паллă тăвать. „Дейли телеграф энд Морнинг пост“ хаçат: Германи Литвара тата Хĕвеланăç Украинăра Полђшăна хирĕçле ĕçсем туса пынипе Полђшăра хытă канăçсăрланаççĕ, çапла пулни ĕнтĕ Германипе Полђшă 1934 çулта туслăх çинчен тунă договăра йăвашлатрĕ, тесе пĕлтерет. Малала хаçат: Германи Полђшăн халђхи чиккисем çине тапăнас пулсан, Полђшă Совет Сойузĕн пулăшăвĕ çине тĕренме шутлать, тесе кăтартса парать.

Полђшăри хаçатсем редакцисем çырнă пысăк статйасем пичетлесе кăлараççĕ, вăл статйасенче Полђшă пуçаруне ырăласа хакláççĕ. „Курйер поранны“ хаçат, Полђшăпа Германи хушшинчи економикăлă тата политикăлă хутшăнусем ытлашши пĕр йеннеле çеç аталанса пыни хăрушлăх кÿнине, вĕсем Германийе çеç усă кÿнине пĕрмайах кăтартса пынăскер, çапла çырать: Литвинăвпа Полђшă посолĕ Гржибовски хушшинче пулнă калаçусем çинчен пĕлтернине Полђшăри обшчĕствĕннăçăн анлă сийĕсем питĕ ырлаççĕ, тет.

(ТАСС).

Болгарири пăлхавсем

Нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче Софире (Болгари столици) пысăк пăлхавсемех пуçланнă.

Болгарире пур çĕрте те вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хунă. Софири халăх хуларан ниçта та тухса каймала марри çинчен приказ илнĕ. Столицăна çарсем хупăрласа тăраççĕ.

(ТАСС).

ХРОНИКĂ

Чвйалĕв йулташа урăх ĕçе куçарнипе Тулашри Суту-илÿ Халăх Комиссарĕн обйазаннăçĕсенчен хăтарнă май, Тулашри Суту-илÿ Халăх Комиссарĕ пулма ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председатĕл замеçтитĕлне Микойан йулташа çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Перепиç умĕн

ÇĔРПÿ. Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçĕ пуçланиччен икĕ уйăх та йулмарĕ.

Çак ĕçре организацисен руководитĕлĕсен пысăк пулăшу парса пымала. Кашни руководитĕлĕн перепиçе иртерме хутшăнакан работниксене (тĕрĕсленĕ тата курсра вĕреннĕ вăхăтра) хăйсен йаланхи ĕçĕнчен хăтармала. Апла пулин те хăшпĕр организацисен руководитĕлĕсем перепиç иртерме çирĕплетнĕ çынсене ĕçрен хăтармасăр тăраççĕ. Государствă банкĕн Çĕрпÿри уйрăмĕн управлђайушчийĕ Григорйĕв йулташ перепиç уйрăмĕн заведуйушчин помошникĕ пулма уйăрнă Й. П. Петров йулташа курсра вĕренме йамасăр тăчĕ. Çĕрпÿ райĕçтăвкомĕ хутшăнсан çеç ăна курсра вĕрентме май килнĕ.

Кривов.

Чита облăçĕнчи чи лайăх колхоз

Чита облăçĕнчи колхозсем Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх выставкине тимлĕн хатĕрленеççĕ.

Выставкăра пулма чи малтан палăртнă 75 колхозран пĕрне Борзинск районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоза çирĕплетрĕ, вăл колхоз облăçра куçса çÿрекен хĕрлĕ йалава илме тивĕçлĕ пулнă. Сталин йачĕпе тăракан колхоза мĕн организациленĕренпе коммунис-орденоносĕц Сарайĕв йулташ пĕр улшăнмасăр йертсе пырать.

Пилĕк çул кайарах хăй тĕллĕн вĕреннĕ мелиоратăр колхозник Болђшаков йулташ пройекчĕ тăрăх колхоз уйхире шăвармала тунă. Колхозниксем Турга йуханшывĕ çинче пĕве пĕвеленĕ, каналсем чавнă, шлђузсем тунă. Çавăнтан вара Турга шывĕ колхозăн темиçе çĕршер гектар акмали çĕрне тата çаран вырăнне шăварса нÿрĕ парса тăрать. Çав участкăсенче тырă питĕ лайăх пулма тытăннă.

Колхоз килес çул Байкал лешйенче халиччен акса туман çĕнĕ тырăпа курăксем: вир, хĕвелçавăрнăшĕ, лђуцернă т. ыт. акма палăртнă.

Çавăн пекех ку колхоз вылђăх-чĕрлĕх ĕрчетес йенĕпе те пысăк çитĕнÿсем тунă. Колхозăн майракалă шултăра вылђăхсем—1.656, сурăхсемпе путексем—10.690, лашасем—1.157, сыснасем—127 тата тĕвесем—64. Государствăн вылђăх-чĕрлĕх ĕрчетмели планне чылай иртерсе пурнăçа кĕртнĕ. Государствăна тĕштырă, аш-какай, сĕт-çу, çăм тăратас плана та срукчен тултарнă.

Колхозниксем кашни ĕçкунĕ çине 5-шер килограм тырă, ултшар тенкĕ укçан илеççĕ. Колхозăн клуб, амбулатори, ача çуратмали çурт, столовăй, шкул ачисен çурчĕ, ача йаçли тата сат пур.

(ТАСС).

Пролетарилӗ полководецӗ

Револ̧уцин малтанхи çулӗсенчех Сергей Миронăвич Кирăв Хӗрлӗ Çарпа унăн ÿсӗмӗпе тата çӗнтерӗвӗсемпе тачă çыхăннă. 1917 çултах вăл Кавказри шурă казаксен бандине хирӗç хӗçпăшаллă кӗрешÿ организацилекенсенчен пӗри пулнă. Астрăхане, Анат Атăла сыхлани, Кирăв йертсе пынипе XI-мӗш арми Царицынран Бакуна çитиччен тунă паттăрла поход çар ӗç искусствинче револ̧уцилӗ бол̧шевикла чаплă пример пулса ӗмӗрлӗхех йулӗ. Хăйӗн пӗтӗм вăйне, массăсен организатăрӗпе руководителӗн пысăк талантне Кирăв дисциплинăлă, тăшмана хирӗç çапăçма тата çӗнтерме пултаракан Хӗрлӗ Çар тăвас ӗçе хунă. Вăл Хӗрлӗ Çар чаçӗсенче дисциплинăна çирӗплетнӗ, боецсемпе командирсене хăватлă, кӗрешме хатӗр, çӗнтерессе шанса тăракан туса воспитани панă. Вăл командирсене çар ӗçӗн стратегипе тактикин искусствине вӗрентнӗ.

Кирăв фронтăн чи ответлă участкисенче пулнă. Вăл вăрçă операцисен планӗсене хатӗрлевӗ, чаçсен командирӗсемпе, комиссарӗсемпе калаçнă, кирлӗ чухне çар чаçӗсен çапăçуне хăй йертсе пынă. Йе автомобил çине ларса, йе лаша çине утланса, йе самол̧отпа — Кирăв пур çӗре те ӗлкӗрнӗ. XI-ш армин Донри, Кубан̧ри контрреволюцине çӗмӗрсе тăкнă, пролетарилӗ Бакуна ирӗке кăларнă.

Граждăн вăрçи хыççăн та, социалисăм строителӗствин ответлă участкисенче, партилӗ-политикăлă пит пысăк ӗçсене тунă чухне, Сергей Мировăвич Хӗрлӗ Çара çирӗплетессишӗн, хамăрăн тăван çӗршывăн оборонă хăватне тӗреклетессишӗн тăрăшма нихăçан та пăрахман.

Кирăв йулташ çар ӗçне тата политикăна вӗренес ӗç мӗнле тăнине тимлӗн сăнанине, Хӗрлӗ Çар чаçӗсен йалипе, кул̧тура ÿсӗмӗпе йаланах интересленнине Ленинград Çар Округӗнчи боецсемпе командирсем уйрăмах лайăх пӗлеççӗ.

Сергей Миронăвич социалисăмлă çӗршывăн оборонине тӗреклетни пит пысăк вырăнта тăнине пайтах хутчен палăртнă. Вăл çак ыйту тăрăх тухса каланисем халӗ те пит вырăнлă, ăслă çулпуçӗн пире мобилизацилекен кăтартăвӗсем пулса тăраççӗ.

„Пирӗн тулти лару-тăру çапла,— тесе каланă Кирăв, Ленинград хулинчи пӗррӗмӗш партконференцинче 1931 çулти декабӗрӗн 12-мӗшӗнче, — хамăрăн оборонă пултарулăхне май килнӗ таран çирӗплетесси, вăйлатасси çине нихăçанхинчен тимлӗн, бол̧шевикла пăхмала. Халӗ пӗтӗм тӗнчере совета хирӗç çӗнӗ вăрçа урса кайсах хатӗрленеççӗ.

… Пирӗншӗн, ленинградецсемшӗн, ку ыйту питӗ пысăк вырăнта тăрат. Епӗр вӗт, есӗр пӗлетӗр, чикӗрен икӗ пусăмра çеç. Ленинград Сойузра мӗнле вырăнта тăнине епӗр пурте пӗлетпӗр, вăл мӗнле пысăк вырăнта тăнине, социалисăмлă строителӗствăна малала вăйлатса пыма пирӗн хулара мӗн пек чаплă пуйанлăх пуррине епӗр пӗлетпӗр. Шăпах çавăнпа пирӗн организацин обйазаннăçӗ хамăрăн Хӗрлӗ Çарпа хамăрăн флотăн хăватне вăйлатас ыйтусемпе уйрăмах тимлӗн, уйрăмах çине тăрса ӗçлесси пулат“.

Çак обйазаннăçсене пурнăçа кӗртмели лайăх примера Сергей Мировăвич хăй кăтартнă. Вăл çар ӗçне тата политикăна вӗренесси мӗнле пыни çинчен вăхăтран вăхăта докладсем итленӗ. Вăл çар чаçӗсенче хăй пулнă, ăна унта боецсемпе командирсем пит пысăк хавасланхпа кӗтсе илнӗ. Кирăв пуринпе те интересленнӗ, унăн куçӗсем нимӗне те асăрхамасăр хăварман. Çар ӗçне вӗренессин планне, çӗнӗ техникăна вӗренсе алла илнине, лагера тухнине, инспектăрла стрел̧басене, комсоставăн вӗренӗвӗпе канăвне, боецсемпе командирсен йăла условийӗсене,—çаксене пурне те Сергей Миронăвич пӗлсе тăнă.

Маневăрсен кунӗсенче Кирăв çар чаçӗсен ӗçӗсене çивӗч сăнанă. Вăл уйрăм боецсемпе, командирсемпе калаçнă. Унпа калаçнисен Сергей Миронăвич питӗ тимлӗ, сывăх çын пулнине ӗмӗрлӗхех асра йулнă. Сергей Миронăвич артиллериссем çӗнӗ хӗçпăшала мӗнле вӗреннипе, танкиссемпе л̧отчиксем çар хатӗрӗсен çӗнӗ техникине вӗренсе мӗнле алла илнипе интересленнӗ. Вăл лайăх водителсене, наводчиксене, штурмансене хăй пӗлнӗ.

Округри партконференцисен ӗçӗсене хутшăнса ӗçлесе, Кирăв командирсене тăшмансене хирӗç нимӗн хӗрхенмесӗр кӗрешме, тăван çӗршыва, партине тата ăслă Сталина йуратма вӗрентнӗ. Кирăв троцкисла-бухаринла предателсене ним хӗрхенÿсӗр тăрă шыв çине кăларнă, вӗсене çӗмӗрсе тăкнă. Çарти коммунистсене парти речӗсен идейăлă тасалăхӗшӗн, пӗрлӗхӗшӗн кӗрешме мобилизациленӗ. Вăл партин кашни членне, комсомолеца примерлă, çар ӗçне тата политикăна вӗренес ӗçре малта пыракан пулма хушнă.

Кирăв йаланах Хӗрлӗ Çарăн вăйлă хăçпăшалӗ — Маркс — Енгел̧с — Ленин — Сталин вӗрентӗвӗ пулнине, çак хӗçпăшала вӗренсе алла илмесен йурăхлă командир тата политикăлă руководител пулма çуккине кăтартнă. Çавăнпа та Сергей Миронăвич Хӗрлӗ Çар чаçӗсене политикăла воспитани парас ӗçе лайăх организацилеме хыта ыйтнă.

Ленинградри Çар парачӗсенче йаланах пулса, çар чаçӗсем мӗнле иртсе пынине, стройри йӗркесене мӗн таран пӗлнине, чаçсем пӗрлӗхлӗ пулнине питӗ пысăк интереспа пăхнă. Мӗнле те пулин чаç хăй отлично хатӗрленнипе палăрса тăрсан вăл савăннă.

Оборонă промышленнăçӗн ӗçӗ çине Кирăв пысăк тимлӗх хунă. Вăл савăтсенче пулнă, хăй патне директăрсене, партком çекретарӗсене чӗннӗ, оборонă вал̧л̧и панă заказсене срукра пурнăçа кӗртнине, Хӗрлӗ Çар вал̧л̧и тăвакан машинсемпе хӗçпăшалсен пахалăхне лайăхлаттарнă.

„Пирӗн хапрăксемпе савăтсен ӗçӗсем мӗн чухлӗ лайăхрах пулаççӗ, Совет Сойузӗн оборонă пултарулăхӗ, пӗтӗм ӗççыннисен тăван çӗршывӗн хӗçпăшаллă вăйӗ çавăн чухлӗ çирӗпрех те шанчăклăрах пулат“, тесе каланă Кирăв.

Ленинград хулинчи парторганизацине Кирăв тăшмансене вирлӗн çапса аркатма йаланах хатӗр тăма вӗрентсе çитӗнтернӗ. Вăл пуçарнипе Ленинградри предприйатисенче савăтсем-крепăçсем тăвас хăватлă йухăм, сывлăшран тапăнассинчен сыхланма халăха массăлăн хатӗрлес йухăм пуçланса кайнă. Кирăв Ленинград хулине—социалисăмăн никам çӗнтерейми крепăçӗ туса хунă.

Кирăва вӗлерни тăватă çул тултарнă кун, Ленинград Çар округӗнчи боецсем, командирсем, политработниксем çулпуç тупăкӗ умӗнче тупа тунине тепӗр хут калаççӗ. Вӗсем социалисăмăн пур тăшманӗсене хирӗç хайаррăн кӗрешӗсси халӗ те чӗретрине калаççӗ. Вӗсем Ленин—Сталин партин аслă ӗçне ӗмӗрлӗхе паранниче, тăван çӗршыв ӗçӗшӗн, хамăр халăхăн ӗçӗшӗн Кирăв чӗререн, пӗтӗм вăй-хала хурса кӗрешнӗ пек кӗрешме сăмах параççӗ.

Комкор М. Хозин.

Ленинград Çар Округӗнчи çарсен командуйушчийӗ.

Ун йачӗ йулӗ ӗмӗре

Йепле телей хӗвелӗ çуттăн
Пирӗн çӗршыв çинче çунат.
Ес çав телейшӗн вăйна хутăн,
Уншăн ес патăн пурнăçна.

Çӗршыв мухтавлăн, çӗнтерÿлӗн
Ÿссе хушат вăй хăватне.
Йепле чӗнетӗн ес хӗрÿлӗн
Çӗнӗ çӗнтерÿсем патне.

Çулпуçӗн тусӗ, савнă Кирăв,
Ес ÿснӗ парти ӗçӗпе.
Ес пулнă ытарма çук ырă,
Ес пулнă çирӗп, хурçă пек.

Тăшман шăлне хăйрать, урнă,
Вилӗм тӗлленӗ сан çине.
Вăл пӗлнӗ: сан ӗç, санăн пурнăç
Ăна вилӗм кÿрессине.

Пур йуплă бандăсен тавраш,
Çӗршыв ӗçне сута-сута,
Шав каварлашнă таврасшăн
Иртнӗ ылханлă вăхăта.

Çук, пулас çук! Çав ирсӗр алă
Питех кӗске ăна тума!
Çилтăвăлла çӗкленчӗ халăх
Тăшман пуçне касса татма!

Йытăсене—йыт вилӗм! терӗ.
Вӗсенчен ан йултăр шăрши!
Хайаррăн хӗççине çӗклерӗ
Хурçăпа витӗннӗ çӗршыв.

Кам таврăма ӗмӗт тытатӗ
Иртнӗ ылханлă кунсене—
Çавăн пуçне вăл касса татӗ.
Хӗç çиçсе анӗ çавăн çине!

Тăшман сан çут кунçулна татрӗ.
Хӗрÿ ӗçре ес çуннă чух.
Ÿкрӗ çӗршывăн чаплă паттăрӗ.
Пирӗнпе савнă Кирăв çук…

Каллех, каллех аса илетпӗр
Партин мухтавлă ывăлне.
Хӗрлӗ йалавсене пӗкетпӗр.
Пуçа тайатпăр ун умне…

Пит чаплă пулнă ун кунçулӗ.
Вăл савнă çӗршыва, пире.
Ун ӗçӗ ӗмӗр чӗрӗ пулӗ,
Ун йачӗ йулӗ ӗмӗре!

УЙАП МИШШИ.

Коммунисăмăн аслă пропагандисӗ

Коммунисăм идейисен чаплă агитатăрӗ тата пропагандисӗ, Кирăв простой, палăрса тăман ӗçсенчех çывхарса килекен коммунисăмăн пăрчӗкӗсене курма пӗлнӗ. **„Пирӗн кашнин алинчи кашни пӗчӗк ӗçех,—тесе палăртнă Кирăв,—питӗ пысăк, капиталисăмăн пиншер çулхи храмӗсене ÿпӗнтерсе йаракан процеса хăвăртлатат“.**

Кирăв ывăнма пӗлмесӗр ӗçлекен çын пулнă, вăл кашни пропагандисран çавна ыйтнă. „Пирӗн пропагандăн пӗтӗм шухăшӗ, тата пӗтӗм пӗлтерӗшӗ, — тенӗ вăл,— пирӗн пропагандă тумалинче çеç мар, пропагандăласа çынна вӗрентессинче пулса тăрат… Епӗр ӗçлевлă парти — акă мӗнре çекрет“.

Револ̧уцин çулăмлă трибунӗ, ӗçхалăхӗн тӗп шухăшӗсене палăртаканӗ, Кирăв коммунисăм пропагандине ӗççыннисем револ̧уцин аслă çӗнтерӗвӗсенче хăйсен кӗрешӳн резул̧татне курмала туса пыма вӗрентнӗ.

Теори тӗлӗшӗнчен тарăн вӗреннӗ çын, Кирăв ленинисăма ывăнма пӗлми вӗренме чӗннӗ. Мӗншӗн тесен „пуласлăх патне кайма пӗр çул çеç—ленинисăма вӗренесси“ пур.

Марксисăм-ленинисăмăн хăватлă идейисен хăватлă вăйӗсемпе çӗнтерсе пыма Кирăв çине тăрса, тÿсӗмлӗ пулса тăрăшса вӗрентнӗ. Ăна итленӗ кашни çын Маркс, Енгел̧с, Ленин тата Сталин ӗçӗсене пысăк тимлӗхпе, çине тăрса, тарăннăн вӗренме тытăннă.

Кирăв школ̧арствăна хирӗç, револ̧уцилӗ теорине çийелтен вӗренессине хирӗç тăнă. Кирăв ӗç çине çийелтен пăхакансене тарăхласа каланă сăмахсем пит çивӗч йанăраççӗ: „хутла пӗлмен çынна хутла пӗлекен çынран палласа илме çăмăл, ку— простой йапала, политикăна лайăх пӗлекен çынна политикăна çителӗксӗр вӗреннӗ çынран палласа уйарма йăвăртарах“.

Сергей Миронăвич Кирăв марксисăмленинисăма, общӗствăа аталанăвӗн саккунӗсене тарăннăн пӗлни бол̧шевика питӗ нумай пани çинчен пайтах хутчен каланă. Совет государствин кашни çӗнӗ çӗнтерӗвӗнчех Кирăв социалисăмăн тӗнчери çӗнтерӳне курнă. Çавăнпа та вăл пирӗн государствă ÿсӗр тата çирӗплентӗр ÿсӗ, социалисăм тăшманӗсене тăрă шыв çине кăларса пӗтерессишӗн çав тери нумай, питӗ хавхаланса тăрăшнă.

„Халӗ пирӗн, — тенӗ Сергей Миронăвич,—чăннипех çирӗп йӗркеленнӗ, социалисăмла економикăн никӗсне тунă çирӗп цементпа çирӗплетнӗ хамăрăн аслă Совет государстви пур. Ку вăл хамăр çӗршыври рабочи класпа нумай мӗлйунлă колхоз хресченӗсене морал̧лӗ кăмăллантарат çеç мар, çавăн пекех, хамăр çӗршыв тулашӗнче, тӗнчери пролетариат хушшинче, Хӗвелтухăçӗнчи тата Хӗвеланăçӗнчи пусмăрта пурăнакансем хушшинче те, социалисăм ӗçӗшӗн чи лайăх агитатăр, чи вăйлă пропагандист пулса тăрат“.

Тепӗр сăмахӗнче Кирăв каланă: **„Нумай та çулсем иртмӗç, епӗр сирӗнпе, хамăр совет çӗршывӗнче кӗрешсе илнӗ социалисăм çине тайăнса çӗрӗн икӗ полушарине те коммунисăм çулӗ çине савăрăпăр“**, тенӗ.

Кирăв ленинла-сталинла вӗрентӗвӗн халăхне пит хыта вăйлăн, хăватлăн хÿтӗленӗ, капиталисăм йӗркине кайала тавăрма хăтланакан тискер тăшмансене, фашисла наймитсене—троцкиссене, бухаринӗцсене, рыкăвӗцсене тата ытти бандитсене нимӗн хӗрхенÿсӗр çӗмӗрнӗ.

Хăватлă, никам çӗнтерейми хӗçпăшалпа — Маркспа Ленинăн револ̧уцилӗ теорийӗпе хӗçпăшалланнă бол̧шевиксен партийӗ нумай мӗлйунлă совет халăхне коммунисăм патне каймали çулпа илсе пырат. Коммунисăмшăн пыракан хамăрăн аслă кӗрешӳре епӗр С. М. Кирăвăн паха сăмахне асра тытатпăр: „Марксисăм-ленинисăм, вăл ӗççыннисене хăйсен тăшманӗсене çӗнтерме вӗрентекен чăн-чăн тата пӗртен-пӗр наукă. Ăна вӗренсе алла илмесен, тӗнчери револ̧уцине çӗнтерӳлӗн тума май çук. Епӗр сирӗнпе Коммунисла Интернационала йертсе пыракан партире, ленинӗцсенчен чи асли, чи пысăккисенчен те пысăкки—Сталин йулташ йертсе пыракан партире ÿссе çитӗннӗскерсем, воспитани илнӗскерсем, çавăнпа епӗр марксисăм—ленинисăм теорийӗпе пӗтӗм тӗнчере коммунисăм çӗнтермеле тума уса курма пултарапăр“.

Халӗ, партири тата партире мар бол̧шевиксен кадрӗсем коммунисăм çӗнтерӗвӗшӗн кӗрешме çӗнӗ, хăватлă идейăлă хӗçпăшалпа „Пӗтӗм Сойузри Коммунистсен (бол̧шевиксен) Парти Историйӗн Кӗске курсӗпе“ пуйанланнă чухне, епӗр Кирăвăн аслă сăмахӗсем тӗрӗссине тата çӗнӗрен ӗненетпӗр. Халăхсен аслă çулпуçӗ Сталин йулташ хăй хутшăнса ӗçленипе тунă „ПСК(б)П Историйӗ“ тухнă май епӗр ăнланулăрах, организацилӗрех пулса тăтăмăр, çапла вара нумай вăйлăрах пулса тăтăмăр.

С. М. Кирăв хăйӗн пӗтӗм чаплă пурнăçне панă коммунисăм идейӗ пӗтӗм тӗнчере çӗнтерет.

В. ИВАНОВ.

ÿКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: Й. М. Непринцӗв художник тунă картинă „С. М. Кирăв çара мобилизациленӗ рабочисемпе калаçат“. (Ленинградри С. М. Кирăв музейӗнчи материалсем тăрăх).

(Сойузфото репродукцийӗ).

Халăх трибунӗ—С. М. Кирăв

1934 çулти декабӗрӗн 1-мӗшӗнче троцкисла-бухаринла шпионсем, кӗтесрен вăрттăн персе, Сергей Миронăвич Кирăва пирӗн ретсенчен туртса илчӗç. Ылханлă ирсӗр предателсем, урса асакан фашисăмăн агенчӗсем халăх ӗçӗшӗн хавхаланса кӗрешекен паттăра, тăван çӗршыва пăрахса тăшмана сутăнакансене пӗр шеллемесӗр тăрă шыв çине кăларакан çынна, çирӗп ленинӗца, Сталинăн соратникне тата тусне вӗлерчӗç.

Халăхăн йуратнă ывăлӗ, унăн çӗнтерӗвӗсен çулăмлă организатăрӗ, Кирăв Ленин каласа кăтартса панă пек револ̧уционерăн—халăх массисен çулпуçӗн чаплă сăнарӗ пулнă. 1919 çулти март уйăхӗнче Й. М. Свердловăн тăпри çинче тухса каласа, Владимир Илйич Ленин бол̧шевик сăнарне çакăн пек сăнласа панă:

„…Йаланах кӗрешÿре пулса нихăçан та массăсенчен уйăрăлман, Роççийăран нихăçан та кайман, пӗрмайах чи лайăх рабочисемпе пӗрле ӗçленӗ тата хӗсӗрленисене пула револ̧уционерăн пурнăçран уйăрăлса тăмала килнине пăхмасăр,—хăйӗнче рабочисем йуратакан çулпуçӗ çеç мар, практикăна пуринчен анлăнрах та пуринчен ытларах пӗлекен çулпуçӗ çеç мар, тата малта пыракан пролетарисен организатăрне те хатӗрлентерсе пыма пӗлнӗ çыншăн вăрттăн ӗçлени вăрăм çулӗ пуринчен ытла характӗрлă“ (т.XXIV, стр. 80—81).

Шăпах массăсен çакăн пек организатăрӗ—халăхран тухнă, халăхпа тачă çыхăнса тăнă, хăйӗн пурнăçне халăхшăн панă организатăр пулнă ӗнтӗ С.М. Кирăв.

Сергей Миронăвич 1886 çулта ӗлӗкхи Вйаткă кӗпӗрнинчи (хал̧хи Кирăв облаçӗ) Уржум хулинче çуралнă. Çамрăклах, 18 çултах, вăл бол̧шевиксен партин членӗ пулса тăнă. 1905 çулти револ̧уци вăхăтӗнче вăл Çӗпӗрте, Томскра пулнă, унта чертежник пулса ӗçленӗ. Çавăн пек çамрăк чухнех Кирăв хăй ывăнма пӗлми, хăйулă, ӗçе хăвăрт тавçăрса илекен организатăр пулнине кăтартса панă. Çамрăк револ̧уционер Томскра рабочисен дружинин пуçӗнче тăнă, вăл Тайга йатлă станцăра чукунçул çинче ӗçлекенсен пысăк забастовкине туса ирттернӗ.

Томскра Кирăв вăрттăн ӗçлекен типографи организациленӗ.

Хула хӗрринче кивӗ, йухăнса кайнă пÿрт ларнă. Пÿрте „йусанă“ пек кăтартса Кирăв, парти комитечӗ хушнă тăрăх, унта вăрттăн ӗçлекен типографи тума тытăннă.

Пÿрте уйăх çурăна йахăн „йусанă“. Йулашкинчен, йăлтах хатӗр пулнă, анчах пÿрте полицейскисем кӗрлесе пырса кӗнӗ. Вӗсем хăйсемпе пӗрле шăпах пӗр взвод салтак илсе пынă. Пÿрте кунӗнех ухтарнă. Салтаксем пӗтӗм килкартишне чавса пӗтернӗ, пÿртӗн урайне уçса пăхнă, çӗре чавса пăхнă, анчах çапах та Кирăв пит ăста пытарса туса лартнă типографине тупайман.

Çапах та Кирăва тата унăн йулташӗсене арӗсленӗ. Виçӗ çул иртсен кăна, хватер урайӗ айӗнчен ăнсăртран ишӗлсе ансан тин, вăрттăн ӗçлекен типографине тупнă. Кирăва çӗнӗрен шырама пуçланă, анчах вăл, арӗсленӗ хыççăн, крепăçре икӗ çул хушши ларса тухнă хыççăн, Томскран Иркутска кайнă пулнă. Типографине тупни çинчен пӗлсен, Çӗпӗртен Владикавказа тухса кайма васканă. Унта вăл „Терек“ йатлă хаçатра, Миронăв хушаматпа ӗçлесе пурăннă.

Çурçӗр Кавказра Кирăв рабочисем хушшинче çеç мар револ̧уцилӗ бол̧шевикла ӗç туса пынă. Вăл Çурçӗр Кавказри пусмăрти халăхсен хушшине кӗрсе кайнă, унта вăл патша влаçне хирӗç кӗрешекен хăйулă борецсем тупнă. Кирăв хатӗрленӗ сахал мар борецсем Çурçӗр Кавказри пролетарилӗ револ̧уцишӗн пыракан кӗрешӗве хутшăннă.

1917 çулти револ̧уцин малтанхи кунӗсенче Кирăв Владикавказра пулнă. Унта вăл казаксен контрреволюцине хирӗç, сăрт-тусем çинчи буржуалă-помешчикле контрреволюцине хирӗç кӗрешнӗ. Кирăв чухăн казаксене, тусем çинчи чухăнсене организациленӗ. Владикавказ совечӗ ăна советсен Пӗтӗм Роççийӗри иккӗмӗш сйесне делегат туса суйласа йанă. Кирăв Петрограда сйеса тухса кайнă, вара унта Октăбӗрти çапăçусене хутшăнса кӗрешнӗ.

Сйесран Владикавказа таврăнсан, Кирăв Терек çинче влаçа советсен аллине илессине хатӗрлет. Вăл казаксен çÿлти контрреволюцийӗ сийне хирӗç, вӗсем казаксене тусем çинче пурăнакан халăха хирӗç-ле çӗклеме тăрăшнине хирӗç татăклă кӗрешÿ пуçланă. Тусем çинчи пӗр халăха тепӗр халăх çине, тусем çинчи пӗтӗм халăха пӗрле вырăссемпе казаксем çине çӗкленӗ старшинасене хирӗç те кӗрешме тивнӗ. Аулсем тăрăх çÿресе, Кирăв револ̧уцилӗ елементсене суйласа илнӗ, тусем çинчи халăха контрреволюцийе хирӗç кӗрешӗве тăма чӗннӗ. Кавказри пӗр-пӗринпе хирӗçсе пурăнакан тӗрлӗ халăхсене пӗр-пӗринпе килӗштерсе, Çурçӗр Кавказри контрреволюцине хирӗç пӗрлӗхлӗ фронт чăмăртантарса пынă.

1918 çулта Кирăв советлă Терек вал̧л̧и укçа-тенкӗ тата хӗçпăшал илме Мускава пынă. Август уйăхӗн вӗçӗнче Кирăв Царицынпа Астрăхан̧ урлă, Калмык çеçенхирӗ тăрăх хӗçпăшал тата çапăçу вал̧л̧и кирлӗ ытти хатӗрсем турттарса тухнă. Владикавказа каймали çула белобандитсем пÿлсе тăнă. Укçа-тенкӗпе хӗçпăшалăн пӗр пайне—Астрăхан̧ çеçенхирӗсем урлă, тӗвесем çине тийесе урăх çӗртен Терек патне çавăрăнса пырса Терек патне илсе çитерме май килнӗ.

Иккӗмӗшӗнче Кирăв Кавказа пулăшу пама пысăк експедици организациленӗ. Ленинпа Свердловран кăтарту илсе, Кирăв Çурçӗр Кавказа илсе çитерме хӗçпăшал, тумтир тата укçа-тенкӗ тийесе тухнă. Анчах Çурçӗр Кавказа çитиччен çӗмӗрсе тухма май килмен ăна.

Партипе правителствă хушнипе Кирăв Астрăхан̧ре ӗçлеме йулнă. Унта вăл Астрăхан̧ крайӗнчи ревком председателӗ тата XI-мӗш армин Револ̧уцилӗ çар совечӗн членӗ пулса ӗçленӗ.

Хулара контрреволюцилӗ пăлхавсем сике-сике тухнă, тиф чирӗ аснă. Çурçӗр Кавказран кайала чакса пыракан XI-мӗш армине йӗркене кӗртмеле пулнă.

Çар хӗлле хăйăрлă, шывсăр çеçенхирсем урлă каçса тухнă. Красноармейӗцсем халран кайса çитнӗ. Нумайӗшӗ аманнă пулнă. Кирлӗ хатӗрсем, апат-çимӗç çителӗксӗр пулнă. Красноармейӗцсен пӗр пайӗ хушшинче ÿпкевлӗ сăмахсем пуçланнă. Вӗсен умне Кирăв пырса тухни çеç кирлӗ пулнă—вара шухăш-кăмăл улшăннă. Йаланах ăша кулăпа, хавасăн шÿт туса, Сергей Миронăвич ывăннисене лăплантарнă, хăй тавра хаваслă, çӗнтерӗве шанакан шухăш-кăмăл туса пынă.

Астрăхане пур йенчен те тăшмансем хупăрласа илнӗ пулнă. Хула çине тинӗс çинчен шуррисен карапӗсем персе тăнă. Фронтран деникинӗцсем хăрушлăх кÿрсе тăнă. Тылран шурă казаксем наступлени туса пынă. Анчах хула парăнман. Сергей Миронăвич Кирăв хулана шургвардейӗцсен бандисенчен ăнăçлăн сыхлас ӗçе организациленӗ. Ун умӗнче Царицына паттăрăн сыхланин—Сталин йулташ организациленӗ оборонăн тӗслӗхӗ пулнă.

Кирăв хăй çапăçусенче пӗрре çеç мар пулнă. 1919 çулти çентăбӗр уйăхӗнче шурă бандăсем Владимирăвкă патӗнче фронта татса кӗнӗ. Хӗрлисен чаçӗсене çӗнтернӗ, вӗсем кайала чакса пынă. Кайала чакакан красноармейӗцсем çине шуррисем çывăхранах персе тăнă. Сасартăк Черный Йар йенчен Атăл çинче хӗçпăшаллантарнă икӗ баркас пырса тухнă. Вӗсем кӗске вăхăтрах тăшман çине тупăсенчен пеме пуçланă. Пӗр баркасӗ çинчен çыран çине пӗр çын аннă. Ку вăл Кирăв пулнă.

Снарйадсем çурăлса сирпӗннӗ, пул̧ăсем шăхăрнă. Çакăн пек хăрушă вырăнта Кирăв саланса кайнă красноармейӗцсене пӗр çӗре пухнă. Вăл малти позицисем çинче пулнă, контрнаступленийе тÿрӗмех хăй йертсе пынă. Вара шуррисене çапса салатнă, вӗсем кайала чакнă.

Изменник Троцкий Астрăхане тăшман аллине пама хушнă. Сергей Миронăвич предателле директивăна пăхăнман, вăл Ленинран кăтарту ыйтса илнӗ. Владимир Илйич: „Астрăхане нӗçне çитиех çыхламала“ тесе ответ панă. Ленин заданине Кирăв чыслăн пурнăçа кӗртнӗ. Астрăхан̧ шуррисене парăнман. Йăлтах урăхла, Кирăв хавхалантарса çӗкленӗ хӗрлӗ çарсем шургвардейӗцсен çарӗсене пуçӗпех çапса салатнă.

Серго Орджоникидзепе пӗрле Кирăв Хӗрлӗ Çарăн çӗнтерӳлӗ чаçӗсене Кавказ çинеле илсе кайнă, ăна шургвардейӗцсемпе интервентсенчен тасатнă. Кирăва Азербайджан компарти Тӗпкомӗн çекретарне суйланă. Йăлтах ишӗлсе пӗтнӗ нефтлӗ Баку Кирăв йертсе пынипе ура çине тăнă. Кирăв нацилӗ работниксен кадрӗсене тăрăшса, сталинла пăхса ÿстернӗ.

1926 çул пуçламӗшӗнче бол̧шевиксен партийӗ Кирăва Ленинграда, предателсемпе изменниксене—зиновйӗвӗцсене хирӗç кӗрешме йанă. Ирсӗр ултавпа тата партилӗ демократине хайаррăн хӗснипе усă курса, ренегатсем—зиновйӗвӗцсем Ленинград бол̧шевикӗсене партирен уйăрса илесшӗн пулнă.

Зиновйӗвла бандăна çӗмӗрес, кăкласа ывăтас ӗçе Кирăв каламалла çук хастарлăн тытăннă. Кашни кунах ăна хулари предприйатисенче курма пулнă. 1926 çулти йанварӗн 5-мӗшӗнче Кирăв Ленинграда пырса çитнӗ. Йанварӗн 6-мӗшӗнче ун сăмахне „Електросила“-ри рабочисем итленӗ, йанварӗн 7-мӗшӗнче Кирăвăн шанчăклă сăмахӗ „Красный ткач“ хапрăкӗнче йанрана. Йанварӗн 8-мӗшӗнче Кирăва „Красный маяк“ рабочийӗсем тăвăллăн саламланă, йанварӗн 11-мӗшӗнче Кирăв Йегорăв рабочи йачӗпе тăракан савăтра тухса каланă, 12-мӗшӗнче—„Красный гвоздильщик“-ре, „Електроаппарат“-ра пулнă.

(Йулашки 3-мӗш. страницăра).

Епĕр ăна нихăçан та манас çук

Кирăвски савăтĕнчи рабочисем С. М. Кирăв çинчен

Сергей Миронăвич Кирăв пирĕн савăта час-часах килсе тăнă, хăна пулнă. Вăл ĕç çине тĕплĕн пăхнă, ватă производственниксемпе калаçса пĕр-пĕрин шухăшĕсене пĕлнĕ, ватă рабочисен сăмахĕсене тимлĕн итленĕ.

Астăватăп, вăл пирĕн пата пуху иртерме килчĕ. Епĕр унпа пĕрле цех тăрăх карăмăр. Вăл ыйтат:

— Сирĕн ĕçсем мĕнле пыраççĕ, тен мĕн те пулин çитмест-и? Материалсемпе, инструментсемпе ĕç мĕнле тăрат?

— Çапла, Сергей Миронăвич, станоксем çитмеççĕ,—тесе калатпăр епĕр.

— Йурат,—тет,—пăхăпăр. хăйĕн пĕчĕк кĕнеки çине çырса хурат.

Тепĕр темиçе кунран пире кирлĕ станоксене илсе те пычĕç.

Вăл час-часах пире, стариксене хăй патĕнче, кабинетра йышăначчĕ, пирĕнпе ĕç çинчен, пурнăç çинчен нумай калаçаччĕ. Епĕ ун патĕнче йышăнура пилĕк хутчен пулнă.

Пирĕншĕн, Путилăвски (халĕ Кирăвски) савăтĕнчи рабочисемшĕн трамвай çулĕ чукунçул урла каçса кайни нумай вăхăт хушши кансĕр пулса тăнă. Пойăс иртсе кайасса çуршар сехет, тепĕр чухне сехетшер кĕтме тивеччĕ, çакăн хыççăн тин вара савăта çитме пулаччĕ.

Пĕррехинче Сергей Миронăвич савăта пынă. Çав вăхăтра пойассем иртсе пынă. Кирăв машинăран тухнă. Пире курчĕ те пирĕн пата васкаса пычĕ.

— Сывлăх мĕнле, Острйаков йулташ?

— Йатламала мар, тетĕп, Сергей Миронăвич, чупатăп-ха.

— Çакăн пек кĕтсе тăмалисем сирĕн час-часах пулаççĕ-и?

— Кашни кун пекех.

Сергей Миронăвич ку ĕç çине çавăрăнса пăхма сăмах пачĕ. Тепĕр темиçе кунтан кĕпер туса талартрĕç. Халĕ çул çинче нимĕн чарăнса тăмали те çук.

Кирăв çинчен аса илсен йаланах манăн чĕре пирĕн чаплă çынна—Ленинградри рабочисен йуратнă çулпуçне уйăрса илнĕ бандитсене тарăхса кайат.

И. Е. Острйаков.

Турбина цехĕнчи бригадиршорин, рабочи стажĕ 50 çул, Кирăвски савăтра 32 çул ĕçлет.

* * *

1934 çулти йанвар уйăхĕн вĕçĕнче поршеҫь колҫцисене хатĕрлекен участкăна Сергей Миронăвич пычĕ. Правительствă тракторсене запаслă пайсем çителĕклĕ парас задачă лартнă. Сергей Миронăвич кĕске срукра пур оборудованисене те пăхса тухрĕ, рабочисемпе калаçрĕ, 75 000 колҫцо туса кăларас вырăнне 150 000 колҫцо туса кăлармала, тесе каларĕ.

Майăн 1-мĕшĕ тĕлне епĕр заданине пурнăçа кĕртрĕмĕр.

Е. Н. Зуйĕв.

Чукун шăратакан çĕнĕ цехри парторг.

* * *

Епĕ Сергей Миронăвич Кирăвпа темиçе хутчен те тĕл пулса калаçнă. Тĕл пулмассеренех епĕ çак çыншăн тимлĕн тăрăшакан чаплă çын çинчен ĕмĕр манми аса илсе йултăм.

Астăватăп, 1929 çулти февраҫьте епĕ штамповкă çинче ĕçлеттĕм, унчухне вăл сборочнай цехăн тĕттĕм кĕтессинче пулнă. Тавралăх пыҫчăк, металл татăкĕсем, стружкăсем купаланса выртнă. Кунта администраци сайра хутра çеç пырса курнă.

Пĕрре ирхине, 9 сехетре, кĕтмен çĕртен: „Кирăв пирĕн патра, Кирăв кунта", тенĕ сасă илтĕнчĕ, епĕ ăна кăшт вăхăт иртсенех куртăм.

Сергей Миронавич станок патне пырса:

— Мĕнле ĕçлеттĕр, ударница-и? тесе ыйтрĕ.

Çак вăхăтра, пăхăр çук пирки ĕç чарăнса тăнă. Епĕр пăхăрне „Красный выборожец" савăтран илсе тăнă. Кирăв унтах çакна çырса илчĕ, тепĕр кун иртсен цехра пăхăр çителĕклĕ таран пулчĕ.

Шутласан çак вăл пĕчĕк ĕç пек, анчах кунтан Сергей Миронăвич Кирăв производствă ĕçĕ çине мĕнле тимлĕн пăхни курăнса тăрат.

1932 çулта пирĕн савăтăн трактăр цехĕшĕн йăвăр кунсем пулнă. Программăна тултараймăн. Сергей Миронăвич производствă ĕçĕ мĕнле пынипе кашни кунах интересленнĕ, чи хĕрÿлĕ ĕçсем пынă чухне ăна йалан цехра курма пулнă. Вăл рабочисемпе калаçнă, хаклă кăтартусем панă. Вăл пуçарнипе урапасене механизациленĕ майпа памала тунă, ку ĕçе нумай çăмăллатнă.

Сергей Миронăвичпа виççĕмĕш, йулашки хут партин облаçри конференцинче тĕл пултăм. Хулари работницăсен йачĕпе конференцине саламлама мана телей тиврĕ. Хамăн сăмахра епĕ хĕрарăмсен делегацийĕ йачĕпе Сергей Миронăвича Ленин хулинчи хĕрарăмсем тата лайăхрах ĕçлеме, производствă программине ударлăн тултарма пулнине йуратнă Сталина каласа пама ыйтрăм.

А. Д. Моиçейĕвă.

Орденоносĕц, механически цехри работницă.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: С. М. Кирăв памйатникĕн моделĕ, В.Б. Пинчук скуҫьптăр тунă. Вăл памйатнике Ленинградри Кирăвски савăт патне лартаççĕ.

(ТАСС фотохроникин репродукцийĕ).

„Епĕр харпăрхăй тĕллĕн вĕренес ыйтусем çинчен сăмах тапратсан, пирĕн час-часах пĕр аргумент—вăхăт çук, кунĕпех чупса çÿретĕп, кунĕпех чĕлхе хулпуççи çинче. Епĕ çапла тума сĕнетĕп: çак чĕлхене пĕр сехетлĕхе те пулин хулпуççи çинчен илсе пăхăр-ха, вара нимĕн хăрушши те пулманнине, лайăхрах пулнине хăвăрах курăр. Есĕ пĕлĕнсе ÿкрĕн пулсан, сан тăрăх шăпăртатса тăр йухат пулсан—çакă вара вăл ĕç пулат, тесе шухăшлаççĕ.

Епĕр хамăр ĕçе çакăн пек йĕркелесшĕн: пирĕнтен кашнийех хаçат вуҫьи те, кĕнеке вуҫьи те, ленинисăма вĕренме те, хăйĕн куҫьтурăлăхне хăпартма та вăхăт тупкăр. Çакă вăл хамăрăн практикăлă ĕçе пысăк вклад хуни пулат, çакăншăн кайран çĕр хут пысăкрах усă пулат. Çапла тунипе кăна парти членĕсен теорилĕ пĕлĕвне кирлĕ пек çÿлĕ вырăна хăпартма пулат те." **(С. М. Кирăв.)**

СЕРГЕЙ МИРОНĂВИЧ КИРĂВА

Хĕле кĕрсен—шăнса Уржум шывĕ,
Çурхи купра вăл ирĕлнĕ каллех.
Анчах та есĕ—çав Уржумăн ывăҫь,
Çурхи куна курман ун чух питех.
Телей çулне кăтартнă Аслă Ленин
Аçу пекех сана пăхни—асра.
Вăл чыспа сан чĕрÿ хĕрсе ĕçленĕ.
Вĕренÿре çĕкленнĕ хытăрах.
Ыр шухăша сармашкăн пит те йăвăр,
Нумай пĕлсе, нумай ĕçлес пулат.
Йату сан пулчĕ кĕрешÿ йалавĕ,
Чĕнет телей патне малран мала.
Ашри хĕме тĕрме те сÿнтереймĕ,
Чуна лăпланатараймĕ нухайкка—
Йăвăр вăхăта тÿснĕ çутă ĕмĕт
Телей çулне хăвармĕ айакка.
Томск тĕрми, Нарым крайĕ те сантăн—
Пурнăç çине хăравçăн пăхни мар.
Ес çапăçнă, кĕрешнĕ пирĕн чысшăн,
Вĕрентрĕн ес пире те çапăçма.
Ленинграда çитерчĕ мана ĕмĕт.
Казахстана çитерчĕç шухăшсем.
Кирек ăçта çитертĕр умри ĕмĕр,
Санăн йатна пĕрлех çÿреп масе.
Вилми ĕçсем нихçан та манăçмаççĕ.
Историшĕн йулаççĕ тивĕçре.
Нихçан та сÿнмĕ Кирăв чĕрии ĕçĕ.
Ун ĕçĕ йулĕ ĕмĕр-ĕмĕре!

МАКÇИМ ЙАСТРАН.

С. М. Кирăв тата Совет çурçĕрĕ

Вырăссен пирвайхи академикĕ М. В. Ломоносăв генилĕ витĕр курса—„çурçĕрти çĕр айĕнче пуйанлăх анлă та нумай", тесе ĕнентернĕ. Вăл çырнă: „Металлсемпе минералсем хăйсем тĕллĕн килкартине килмеççĕ. Вĕсем хăйсене шырама куç тата алă ыйтаççĕ". Анчах та патша правительствин çав куççем те, алăсем те пулман. Революци хыççăн çеç Сергей Миронăвич Кирăв И. В. Сталин йулташ йертсе пынипе болҫшевиксене çурçĕре аслă похода кăларса йачĕ. Вăл учонăйсене Ломоносăв каласа хăварнă çулпа кайма хĕрÿлĕн чĕннĕ.

Кирăв темиçе хутчен те çурçĕрте пулнă. Колҫски çурмаутрав çине вăл малтанхи хут çурмаутрава картă çине талккишпех шурă паллă тунă вăхăтра кайнă. Çурмаутрав çине кайма çултаăкри чи йăвăр вăхăта, декабĕр уйăхне, поҫьарти çĕрлене суйласа илнĕ. Пулас строительсем çул çинче тĕл пулмали пур йăвăрлăхсем урлă вăл хăй каçасшăн пулнă. Çурçĕрти хăватлă строительствă çулĕ çинче чăрмавсемпе йăвăрлăхсене мĕнле çĕнтермелине Кирăв ленинла-сталинла тимлĕхпе çине тăнипе кăтартнă.

Хибин сăрчĕсем çинче Кирăв пулнă хыççăн, тĕнчери пĕртенпĕр тата пит нумай апатитсем пур вырăнта пысăк стройкă пуçланса кайнă. Хибин сăрчĕ çинче халиччен етемлĕхрен пытанса тăнă пуйанлăха Кирăв хăй совет çĕршывне вайҫьи туртса илнĕ. Хибин тундринче—Кирăвск йатлă хула, пысăк хапрăк, мĕлйуншар тонна руда кăларакан рудник ÿссе ларчĕç. Халĕ Хибинран пĕтĕм çĕршыв вайҫьи фосфорит удобренисем турттараççĕ, унччен ăна епĕр йут çĕршывсенчен илсе килнĕ пулнă.

Парти çурçĕрте ĕçлеме йанă çынсем Сергей Миронăвичпа сыхăву тытнă. Вĕсем час-часах тупике лекни çинчен, халĕ Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем тăрă шыв çине кăларнă сăтăрçăсем строительствăна вăрттăн, тискеррĕн аркатма хăтланни, хăратса ÿкерме хăтланни, йăвăрлăхсене ытлашши ÿстерни çинчен каласа параççĕ. Троцкисла-бухаринла йытăсен сăтăрла ĕçĕсене хирĕç кĕрешме, йăвăрлăхсене çĕнтерме Сергей Миронăвич Кирăвран пулăшу илнĕ.

Сергей Миронăвичăн Смоҫьнăйри ĕç кабинетĕнче йалан çурçĕрте тупнă тĕрлĕ минералсемпе металлсен образецĕсем пулнă. Вăл геологсен çурçĕрте тĕрлĕ пуйанлăхсене шыракан партийĕсем тупнă металлсемпе минералсен образецĕсене çийĕнчех хăй патне илсе пыма хушнă. Час-часах çурçĕрте мĕн те пулин тупсан, вăл Кирăв аллине лексен, ăна Сергей Миронăвич тĕплĕн пăхнă, сăнанă, вара çав йапала хамăр çĕршыва вайҫьи кирлĕ пысăк пуйанлăха тупса усмали çăрауççи пулса тăнă. Сергей Миронăвич пĕчĕк йĕр хыççăн кайсах пуйанлăх шырас ĕçе организациленĕ. Çакна пула Колҫски çурмаутравĕ çинче апатит-нефелин вырăне тупнă. Ку пĕтĕм тĕнчере паллă вырăнта тăрат. Унта икĕ мĕлйард тоннă тимĕр, никеҫь, ловчоррит, ванадий пур.

Кирăв тÿремĕн хутшăнса ĕçленипе Шурă тинĕспе Балти тинĕс хушшинче Сталин йачĕпе тăракан канала тунă. Çак канал Балти тинĕсне тата Ленинград хулине Шурă тинĕспе, Çурçĕрти пăрла океанпа çыхăнтарат.

Нихçан шăнман Мурманск порчĕ—çурçĕрти чи пысăк портсенчен пĕри, Арктикăна тухмали алăк пулса тăчĕ.

Мурманск хули çурçĕрти куҫьтурăлă-промышлĕннăçлă центр, пулă тытмали тĕнчери паллă промысла центрĕсенчен пĕри пулса тăчĕ. Нева, Тулома тата Печора йуханшывĕсем çинче хăватлă гидроелектростанцисен строительствисем, социалисăмăн çурçĕрти крепăçне—Çурçĕрти Тинĕç-Çар Флотне тунн. Мончегорски строительстви Кирăв йачĕпе çыхăнса тăраççĕ.

Кашни строительствăн никĕсне хунă чухне пĕр вăхăтрах Кирăв пуҫьницасем, йаслĕсем, шкулсем, клубсем тутарнă. Çурçĕрти çынсен тискер тăшманне—цынгана хирĕç Кирăв пахча-çимĕç тата сĕт-çу совхозĕсем тăвас идейăна кăларса тăратнă. Çак идейăна Совет Сойузĕн чи малта пыракан учонăйĕсем пит те чаплăн пурнăçларĕç.

Колҫск çурмаутравĕ çинче, Печорăра, Карелире, халĕ ĕнтĕ Пăрлă океанăн пĕтĕм çыранĕ тăрăх, ĕлĕк „пĕтмели вырăнсем" тенĕ çĕрте ыраш акса тăваççĕ, помидорсем, хăйарсем, редискă, салат ÿстереççĕ. Йулашки çулсенче Колҫск çурмаутравĕ çине пурăнма çĕршер пин çын куçнă, пĕр çын та цингапа чирлени пулман. Баренцов тинĕсĕнче Кирăв пурăннă вăхăтра кашни çул пулă пит нумай тытнă, революциччен ун чухлĕ темиçе çулта та тытайман.

Нумай пулмасть Совет Сойузĕнчи чи çамрăк хуласенчен пĕринче—Мончегорскра пăхăрпа никеҫь комбиначĕ ĕçлеме тытăннă. Рудан малтанхи тоннисене шăратнă, никĕлĕн малтанхи çурма фабрикатне илнĕ. Çак комбинат пирĕн çĕршывăн хуçалăхĕнче пысăк вырăнта тăрат.

Колҫск çурмаутравĕ çинче никеҫь шырасси Сергей Миронăвич Кирăвăн тăрăшнипе пуçланнă. Сергей Миронăвич Кирăв хăй пуçарнипе тытăннă строительствăна—пăхăрпа никеҫь комбинатне туса пĕтеричченех пурăнаймарĕ. Вăл хăй пуçарнă нумай ĕçсене вĕçлесе çитеричченех пурăнаймарĕ. Фашисла троцкисла-бухаринла бандитсен тискер алли болҫшевикăн хĕлхемлĕ, хĕрÿлĕ пурнăçне пĕтерчĕç. Кирăва кĕтесрен персе вĕлернĕ бандитсене унпа пĕрле унăн аслă ĕçĕсене пĕтерсе хума шутланă. Вĕсем çавна тăваймарĕç. Кирăв ĕçĕ ĕмĕрех пурăнат. Вăл çурçĕрте тунă пĕтĕм ĕçсем—вăл социалисăмăн кĕрешнине кăтартакан ĕмĕрлĕх памйатниксем пулса тăраççĕ.

Н. Сергейĕв.

Простой, рабочисемшĕн çывăх та ăнланмала Кирăв агитаци тăвас ĕçре тĕлĕнмеле ăста пулнă. Унăн чĕре хĕмĕпе çунса тăракан сăмахĕсем мĕлйуншар çынсене çулăмлантарса çĕкленĕ, кĕрешĕве тăма организацилеме. „Çакна ан манăр: **пирĕн болҫшевикла парти ытти пĕтĕм партисенчен йаланах çакăнпа уйрăм тăнă: вăл сăмаха ĕçрен уйăрмаст, вăл хăйĕн решенийĕсене, нимĕне пăхса тăмасăр, çирĕппĕн ĕçе кĕртсе пырат, мĕншĕн тесен вăл решенисем тĕрĕс, пĕртенпĕр пулма пултаракан тата чăн-чăнах çĕнтерÿ кÿрекен решенисем**", çапла каланă Кирăв ПСК(б)П райкомĕсен çекретарĕсемпе райĕçтăвкомсен председателĕсен канашлăвĕнче, 1931 çулти нйувĕн 29-мĕшĕвче.

Троцкисла-бухаринла предательсене пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе пырса, Кирăв хамăрăн аслă тăван çĕршыври мĕлйуншар ĕççыннисене сталинла пилĕкçуллăхсемшĕн, социалисăмлă индустриализаципе коллективизацишĕн кĕрешес ĕçе çĕклерĕ.

Путиловски савăтра трактăрсем туса кăларас ĕçе вĕренсе алла илни, Хибинăра апатит кăларма пуçлани, Шурă тинĕспе Балти тинĕсĕ хушшинчи каналăн строительстви, техникăпа оборонăн пĕрремĕш класлă хĕçпăшалĕсене туса кăларма тытăнни,—çаксем вĕсем Кирăв йачĕпе çыхăнса тăраççĕ. Сергей Миронăвич йертсе пынипе Ленинград социалисăмла индустрийĕ çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантармали базă пулса тăчĕ. Иксĕлми вăй-хăватлă çын, Кирăв, савăтсемпе хапрăксенче, колхозсемпе стройкăсенче, çар карапĕсемпе ăслăлăх институчĕсенче час-часах пулнă,—государствăн паллă дейателĕ С. М. Кирăв социалисăм тăвас ĕçĕн пĕр участкине те курмасăр иртерсе йаман. Йалан массăсем хушшинче, йалан массăсемпе пĕрле пулса, чаплă организатăр хăйне пĕтĕмĕшпех халăх интересĕшĕн кĕрешес ĕçе, социалисăм ĕçĕшĕн кĕрешес ĕçе панă.

Хăйĕн пĕтĕм пурнăçĕпе, пĕтĕм кĕрешĕвĕпе Кирăв политикăлă дейателĕн ленинла-сталинла сăнарĕ пулса тăнă. Вăл уçă тата паллă тĕллевлĕ дейател пулнă, çапăçура пĕртте хăраса тăман, халăх тăшманĕсем тĕлĕшпе нимĕн шеллемен дейател пулнă, вăл ĕç йăвăрланма пуçланă чух тата горизонтра мĕнле те пулин хăрушлăх курăнма пуçланă чух кирек мĕнле паникăран та, кирек мĕнле паникă пеккинчен те ирĕклĕ пулнă, йăвăр ыйтусене татса памала чух, пур йенчен те тавçăрса илме тата плҫуссемпе минуссене пур йенчен те шута илме кирлĕ пулнă çĕрте вăл ăслă пулнă тата тивĕçсĕр васкамасăр ĕçленĕ, хăйĕн халăхне, ăна Ленин йуратнă пек, ăна Сталин йуратнă пек йуратнă.

Революцилĕ кĕрешÿре вăтăр çул хушши татти-сыпписĕр кĕрешсе, Кирăв рйадовой боецран халăх трибунĕ пулса тăни патне çитиччен уçă та таса, геройла çулпа утса тухнă. Мĕлйунсен асĕнче Кирăв революцилĕ паттăрлăхпа шиксĕрлĕхĕн символĕ, кĕрешÿпе çĕнтерÿсен символĕ пулса йулчĕ.

Кирăв çине тĕллесе персе, тăшмансем совет халăхĕн ирĕклĕхне, вăл никама пăхăнмасăр пурăнассине совет халăхĕн йунĕ ăшне путарма хăтланнă, пирĕн тăван çĕршывран империалисла государствăсен колонийĕ туса хума, ирĕклĕхе йуратакан пирĕн паттăр халăха чуралăха кĕртсе ÿкерме тăрăшнă.

Тăшмансем пит хытă йăнăшрĕç. Кирăв çине пени халăхăн аслă çиллине çĕклесе йачĕ. Хăйĕн правительстви тавра, хăйĕн çулпуçĕ те учителĕ Сталин йулташ тавра тачă пĕрлешсе пĕтĕçнĕ совет халăхĕ—çилленнĕ чух тăшманшăн хăрушă совет халăхĕ—троцкисла-бухаринла бандитсене, фашисла çынвĕлерексемпе диверсантсене тĕппипех пĕтерсе тăкнине пĕтĕмĕшпех ырăлат. Сталинла Халăх Комиссарĕ Н. И. Йежов йертсе пыракан совет разведки фашиссен тарçисен тĕп йăвисене çĕмĕрсе тăкрĕ, пĕтерсе хучĕ. Анчах социалисăмăн тăшманĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе çитереймен-ха. Маскăсемпе чеййен витĕнсе, çак фашисла шпионсем хăшпĕр çĕрте хăйсен ирсĕр, ишĕлтерÿлĕ сăтăрлă ĕçĕсене туса пыраççĕ. Халăх тăшманĕсем кирек мĕнле маскăпа витĕнсе тăрсан та, кирек мĕнле хушăксене кĕрсе пытансан та, вĕсене пурне те, пĕрне те хăвармасăр, тăрă шыв çине кăларса пĕтерсе хурĕç.

Совет халăхĕ, хăйĕн революцилĕ сыхăлăхне пур майсемпе те тĕреклетсе пырса, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе рабочисемпе хресченсен государствин хăватне малашне те тĕреклетсе пырĕ, малала, социалисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне пырĕ. «Истори ыран пирĕн умма тата ытларах йăвăр задачăсем ларттăр,—тенĕ Кирăв,—вĕсем пирĕншĕн хăрушă мар, мĕншĕн тесен ыран епĕр, калама çук пысăк опытпа пуйанланнăскерсем, хамăрăн аслă парти, хамăрăн çулпуçăмăр Сталин йулташ кăтартса панисене тата çирĕпрехкĕн, тата ытларах çине тăрса, тата ытларах организациллĕн пурнăçа кĕртсе пырăпăр».

И. Минц.

„Кирăва асăнса" симфони

Вано Мурадели композитăр-комсомолĕц Сергей Миронăвич Кирăв йачĕпе симфони çырнă. Вăл—çамрăк композитăрăн пĕрремĕш симфонийĕ тата болҫшевик-трибунăн, Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕн, Сталин йулташăн ученикĕ тата тусĕ пулнă çыннăн ытарма çук паха сăн-сăпатне музыкă ерешĕсемпе сăнласа кăтартас тĕлĕшпе пĕрремĕш пысăк симфонилĕ произведени пулса тăрат.

Вано Мурадели композитăр Кирăвăн сăн-сăпатне кăтартса пама ăшă, савăнăçлă сăрсем, хăватлă та туртăмлă кĕвĕсем тупма тăрăшнă.

Кирăв çинчен çырнă симфони—вăл мĕлйун çынсем йуратакан çын çинчен çырнă симфони пулса тăрат. Йăвăр минутсенче хăйне лăпкăн тытни; самодержавипе кĕрешнĕ çулсенче, граждăн вăрçи тата социалисăм строительстви çулĕсенче хĕрÿлĕн ĕçлени; тăшмансене хайарлăн курайманни; ĕçхалăхне, ача-пăчасене тата çамрăксене çепĕçĕн те ăшшăн йуратни; çынсене çирĕп те татăклă пулма вĕрентни; болҫшевикла сисĕмлĕхпе çыхăннă тĕлĕнмеле хавасլăх; кĕрешÿре те тата мирлĕ стройкăра та йаланах мобилизацилĕ хатĕр тăни—çаксем пурте болҫшевик Кирăвăн пахалăхĕсем, хăйĕн симфонинче Мурадели çав йенсене кăтартасшăн пулнă.

Мурадели симфонийĕ—Кирăв çинчен ăнаçлăн çырнă пĕрремĕш музыкăлă произвелени. Епĕр Кирăв çинчен нумай йурă-сăвă илтнĕ, пĕр темăпах вуншар йурă çырнă, анчах вĕсем йе сăмахсен хăмпăлăхĕпе, йе хурлăхлă музыкăн пĕрйенлĕхĕпе уйăрăлса тăраççĕ.

Мурадели хăйĕн йуратнă тата тĕплĕн тĕпчесе тухнă темăна—Сергей Миронăвич Кирăвăн сăн-сăпатне анлăн илсе кăтартат. Вăл, натуралисăмла вак-тĕвеклĕхрен çăлăнса, пролетарилĕ революционерăн пурнăçĕпе пархатарлă ĕçĕсене художĕствăлă пĕтĕçтерÿ туса кăтартасси патне туртăнат.

Симфонин малтанхи пайĕнчи аккорчĕсемпех композитăр пĕтĕм произведенин тонне парат. Пирĕн умра—пысăк туртăмпа вĕресе тăракан вăй-хăватпа тулнă паттăрлăх сăн-сăпачĕ. Тĕпрен илсен, Мурадели хăйĕн симфонийĕнче Кирăва çапла туса кăтартнă: вăл хĕрÿ чĕрелĕ, нимрен те хăрамаст, уçă чунлă, нихçан та йăвашланми хăват пек курăнат.

Грузин Вано Мурадели хăйĕн произведенинче хăйне çывăх Грузин йурри-кĕввисене лайăх йĕркеленĕ. Симфони пĕтĕмпех йанравлă, çепĕç кĕвĕлĕ. Ăна пуçласа вĕçне çитиччен ех йурлама пулат. Ку йен ăна совет авторĕсем çырна ытти симфонилĕ произведенисенчен уйăрса тăрат. Музыкă сире хăйĕн йухăмĕпе, хăйĕн çамрăк вăйĕпе йарса тытат.

Хăйĕн вăйне çирĕппĕн ĕненни, иксĕлми вăй-хăват пулса тăни, болҫшевикла вăйсене пĕтĕçтерме чĕнекен сасă—çапла ăнланмала симфонин пĕрремĕш пайĕнчи музыкине.

Иккĕмĕш пайĕ хурлăхлă кĕвĕпе пуçланат. Кирăв пирĕнпе çук. Калама çук чаплă пурнăç чарăннă. Мускав хурланат, хурланат Ленинград тата Хибиногорск, Баку тата Владикавказ, хурланат пĕтĕм халăх. Чĕре йăвăррăн ыратат. Кирăва тăшмансем вĕлернĕ. Халăх тăшманĕсем пытанса тăнă. Тăшмансене питлекен халăхăн çилли хайар. Фашисла çĕлен-калтасем совет правосудин хĕçĕнчен нимле те хăтăлаймĕç. Музык хăватланнă çемĕн хăватланса пырат. Лăпланса лармала мар! Лăпланса лармала мар! Тăшманăн йулашкисене тăрă шыв çине кăлармала! Ылхану музăкĕ хăйĕн вăйĕпе тĕлĕнтерет.

Симфонин виççĕмĕш пайĕ чĕрĕ Кирăвăн сăнлăхе патне илсе пырат. Миронăч мĕлйунсен асĕнче, чĕрисенче, йуратăвĕнче пурăнат. Акă вăл ача-пăчасемпе йаш-кĕрĕмсем хушшинче ларат. Кулат, шÿт тăват, йурлат—çав терийех йуратат пурнăçа Кирăв! Сергей Миронăвичăн ПСК(б)П XVII-мĕш сйесĕн çÿлĕ трибунĕ çинчен каланă çак сăмахĕсем историлĕ пулса тăчĕç:" Чăнах та пирĕн ÿсĕмсем пысăк. Шуйтан пĕлети ăна, етемле калас пулсан, çав тери пурăнас та пурăнас килет".

Çак сăмахсенче паттăр вăй, çĕнтерĕве ĕненни курăнса тăрат. Тăшмансене Кирăв мĕнле амантма, вĕсене мĕнле çĕмĕрме пĕлнĕ! Унăн „революци обозникĕсем" çинчен калакан сăмах çавăрнăшĕ пурнăçа йаланлăхах кĕрсе йулчĕ.

Мурадели музыкăра Кирăвăн çĕкленĕвлĕ кăмăлне, хаваслăхне, вăйне лайăх кăтартса панă. Симфонин виççĕмĕш пайĕ пурнăç кăнтăрăн выҫьавлă шевлипе тулнă.

Симфонин финалĕ—вăйлă та хăватлă музыкă. Финала итленĕ чухне масса лăпкăн иртнине, ĕмĕтсен анлăхне, ĕçхалăх вăйĕн пĕррелĕхне тата хастарлăхне туйса ларатăн. Çапла йанрат чаплă сталинĕц пурнăçĕ çинчен çырнă паха симфони.

Георгий Поҫьановский.

Турнирта пулнисемпе калаçни

Пĕтĕм тĕнчери шахмăт матч-турнирĕ пĕтнĕ хыççăн ТАСС корреспонденчĕ телефон тăрăх Амстердампа çыхăнса, турнирта пулнисемпе калаçнă.

М. БОТВИННИК.

Пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери шахмăт матч-турнирне унăн участникĕсен интересĕсене шута илмесĕр организациленĕ. Час-часах вырăнтан вырăна куçса çӳрени шахматиссене ывăнтарчĕ. Час-часах апатланмасăрах йулма та тиврĕ, мĕншĕн тесен вăхăт çителĕксĕр пулнă. Паллах, çакăн пек условисем пуринчен малтан ватăраххисене—Алĕхинпа Капабланкăна йăвăр килнĕ.

Турнирта çĕнтернисем Кереспа Файн хăйсем лайăх выляние кăтартса пачĕç.

Голландире шахмăтпа питĕ интересленӗççĕ. Гронинген, Цволле тата Бреда пек пысăк мар хуласенче те турнир пулса иртекен залсене куракансем нумай пухăнчĕç.

Нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче, манăн йатпа тăракан клубра, епĕ пĕр вăхăтрах 25 çынпа шахмăтла выляса иртеретĕп.

Декабĕрĕн 2-мĕшĕнче Бельгине тухса кайатăп, унтан вара—тăван Ленинграда, унта питĕ кайас килекен пулса çитрĕ.

Х. Р. КАПАБЛАНКĂ.

Турнир мана ывăнтарса çитерчĕ. Уйрăмăнах турнир вĕçнеле мана выляма питĕ йăвăр пулчĕ.

Çамрăксем—Пауль Керес, Реубен Файн тата Михаил Ботвинник хăйсене чи лайăх йенчен кăтартса пачĕç. Сăмах та çук, çак вăйлă шахматиссене çамрăклăх та пулăшрĕ. Пире, „ваттисене", хĕсĕнкелеме тиврĕ.

Епĕ малашне пулмали пĕтĕм тĕнчери шахматиссен пысăк турнирĕсене хутшăнма шухăшлатăп. Çавăн пекех епĕ тĕнчери чи вăйлă шахматис йатне илессишĕн Алĕхинпа кĕрешсе, вăйсене виççе пăхас шухăша пăрахман. Кунта йĕтĕ Алĕхин килĕшни çеç кирлĕ.

Рĕзинăран йапаласем тăвакан Шупашкарти савăт строительствинчи ударница Анастаçийă Дмитрийевнă АНДРЕЙЕВĂ йулташ. Еç нормине 135 проц. тултарать.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Фашисла агрессăрсен сойузĕ

Англи хаçачĕ „Ньйус кроникл" пĕлтернĕ тăрăх, Германи, Итали тата Йапони Коминтерна хирĕçле пакт çумне хушса, виçĕ государство хушшинче вăрçă сойузĕ тума çĕнĕ договăр хатĕрленĕ. Çак договăра йĕтĕ асăннă государствăсен столицисенче çирĕплетнĕ те.

Договăра вунă çуллăха тунă, çав вунă çул хушшинчи срукра договăр тунă государствăсенчен пĕри те пăсмасан, договăр вăйĕ тата пилĕк çула тăсăлать.

(ТАСС).

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсемпе Германи

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен президенчĕ Рузвельт финанс министрве суту-илӳ ĕçĕнче Германине ытти çĕршывсемпе тунă килĕшӳ тăрăх памали çăмăллăхсене памала мар тума хушнă. Çак çăмăллăхсемпе, Германисĕр пуçне, ытти çĕршывсем пурте усă кураççĕ.

(ТАСС).

Ертел ӳссе çирĕпленчĕ

Тăхăр çул кайала Йакимăвă йалĕнче (Шупашкар р.) 27 çынтан организациленĕ „Дружба" промысла ертелĕ халĕхи вăхăтра 501 çынтан тăрать. Вăл çак çулсем хушшинче чылайăх ӳссе çирĕпленчĕ. Малтанхи çулсенче çулталăкне икшер пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă пулсан, кăçал 10 уйăх хушшинче 286 пин тенкĕлĕх ытла кăларнă.

Ертелĕн 4 маçтерской пур. Вĕсенче çуна-урапасем, сĕтел-пукансем, ĕççынние йăлан кирлĕ т. ыт. тăварсем те тăваççĕ. Пур ĕçре те вырăнти кадрсем, специалиссем ĕçлеççĕ.

Культурăпа йăла строительстви йенĕпе те ертел чылай пысăк утăмсем тунă. Клуб, фельдшер пункчĕ пур. Членсем çулсерен тĕрлĕрен курортсенче канаççĕ. Акă кăçал курортсемпе санаторисенче 11 çын каннă.

С. Мамайĕв.

Трактăрсене йусас ĕç малта пыракан МТС-че

Харькăв облаçĕнче малта пыракан МТСтанцисемпе маçтерскойĕсем трактăрсене йусас ĕçе йăнăçлăн туса пыраççĕ.

Волчанск МТС трактăрсене йусас квартăлти плана облăçра чи малтан тултарнă, вăл 24 трактăр вырăнне 28 йусаса кăларнă. Трактăрсене йусама малтанах тĕплĕн хатĕрленни тата ĕçе стаханăвла организациленни ремонт ĕçне пысăк йăнăçлăхпа туса пыма май панă. Трактăрсене йусама тытăниччен малтан маçтерскойа кирлĕ хатĕрсене лайăх йĕркелеçе тата запасла чăçсене çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. МТС-че ĕçлекенсем трактăрсене йусас ĕçе пурте пысăк тимлĕхпе тата организациллĕхпе тытăннă.

Маçтерскойра ĕçлекенсен коллективĕ çĕнĕ çул пуçланнă тĕле МТС-ри трактăрсене пĕтĕмпех йусаса çитерме пулнă.

(ТАСС).

Рак чирĕ çинчен

Рак чирне хирĕç кĕрешекен Пĕтĕм тĕнчери лига йышăннă решени тăрăх, кăçал нойабĕрĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа 52 çĕршывра, вăл шутрах ССР Сойузĕнче те, рак чирне хирĕç кĕрешмели пĕтĕм тĕнчери ерне пулса иртрĕ. Çак „ерне" умĕнче тăракан задача вăл—халиччен пухнă опыта пĕтĕçтерсе тухасси, рака хирĕç кĕрешмели метăдсене, çавăн пекех тата вăхăтра диагностика тумали метăдсене сарасси пулса тăрать. Çак кунсенче пур çĕрте те рак чирĕ çинчен научнăй конференцисем, лекцисемпе докладсем пулса иртеççĕ.

Етем организмĕн чирĕсенчен чи йăвăрри тата чи усалли—вăл рак шутланать. Йулашки çулсенче çак хăрушă чир мĕнпур капиталисăмлă çĕршывсенче чакма мар, сарăлнă-çемĕн сарăлсах пырать. Рака тата унпа кĕрешмели меслетсене вĕренсе тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе тĕнчери чи пысăк учонăйсем ĕçлеççĕ. Рак çинчен вĕрентекен наукă уйрăмах Совет Сойузĕнче анлăн сарăлса кайнă. Пирĕн совет государстви наукăпа тĕпчев ĕçĕсене тума калама çук пысăк укçа-тенкĕ тăкаклать, çав тери чаплă лабораторисемпе институтсем тăвать.

Мĕнле чир-ха вăл рак? Рак вăл етем организмĕн тул йенче те, шал йенче—ăшра та пулать. Рак лекнĕ вырăнти ӳт шыçăнса кайать те йеринепех ӳсме тытăнать. Усĕçемĕн ӳссе пырса, рак суранланса пӳрленме пуçлать. Йулашкинчен вăл чир хăй таврашĕнчи оргăнсене те тата ытти çĕре те сарăлса кайать. Çавăн пек ӳт çинче усаллăн сарăлса, суранланса, пӳрленсе пыракан чире рак чирĕ теççĕ.

Рак хырăмра, пыршăра, тута çинче тата хĕрарăмсен маткăра та пулать.

Ракпа чирленĕ çын кунран кун вăйсăрланса, начарланса пырать. Унăн сăн-сăпачĕ тĕксĕмленсе, шуралса кайать. Ку чиртен нимĕнле майпа та сывалма тăрăшмасан, çав çын вара, пĕтĕмпех начарланса çитнипе, вилет. Мĕншĕн тесен, рак пулнă вырăнтан наркăмăшлă йапаласем пĕтĕм ӳте сăрăхса, сарăлса пыраççĕ. Çак наркăмăшлă йапаласем чирлĕ çынна хавшатса, унăн вăйхалне пĕтереççĕ.

Мĕнтен пулать рак чирĕ? Рак чирĕ мĕнрен пулнине халĕхи вăхăтра пĕр учонăй та тĕплĕн пĕлсе çитмен-ха. Анчах паллă: рак—вăл йерекен чир мар, ăруран ăрува куçмасть тата ăна тĕрĕс те вăхăтра сиплесен, паллах, ракран сывалма пулать.

Ракран мĕнле майпа сывалма пулать? Рак чирне пуринчен ытларах операци туса сиплеççĕ. Анчах çийĕнчех сиссе палăртнă рак чирне çеç операци туса сиплеме пулать. Çийĕнчех сисеймен, вăрăма кайнă ракран сывалма йăвăртарах. Тепĕр чухне ку чире рентген çутипе сиплеççĕ. Çавăн пекех радий металран пирĕн куçа палăрми çутă пек тухса тăракан пайăркасен вăйĕпе те сиплеççĕ.

Çапла вара, рак чирĕнчен сывалас тесен, ăна сиссенех, çийĕнчех врачсене пĕлтермелле. Пуринчен ытла ăшри рака палăртма йăвăртарах. Анчах халĕхи вăхăтра рентген çутипе ăшри рака та тупса палăртаççĕ.

Врач Макарăв.

Ăмăртса сутаççĕ

ЙĔПРЕÇ. Государствăна кооперации урлă тырă сутмала тунине „Çиçĕм" колхозри колхозниксем ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Колхозниксен нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче пулнă аслă пухăвĕнче государствăна ирĕклĕн тырă сутасси çинчен сӳтсе-йăврĕç. Колхоз председателĕн заместителĕ П. Николайĕв йулташ тырă сутни хамăршăнах усăлли, вăл государствă тĕрекне ӳстерни çинчен каласа пачĕ.

— Пирĕн государствăна йĕритавралах капиталисăмлă государствăсем хупăрласа тăраççĕ. Пирĕн вĕсенчен лайăх сыхланмала. Хамăрăн йуратнă тăван çĕршыва куç шăрçине сыхланă пек сыхламала. Государствăна хамăрăн ытлашши тырра сутнипе епĕр çпекулянтсене хирĕç кĕрешессине вăйлататпăр. Тырă хакне ӳстерме чаратпăр. Хулапа йал çыхăнуне çирĕплететпĕр. Епĕ 150 килограм тырă сутса, ман пекех сутма 2-мĕш бригадăн бригадирне Н. Алексейев йулташа чĕнетĕп,—терĕ Николайĕв йулташ.

Çапла пуçланса кайрĕ „Çиçĕм" колхозра государствăна ирĕклĕн тырă сутасси. Ăмăртăва тухса пĕр-пĕрне чĕнсе государствăна тырă сутаççĕ.

Алексейĕв—Николайĕв чĕнĕвне йышăнса, Йефремăв колхознике чĕнет. Йефремăв килĕшет, теприне чĕнет. В. Орлов комсомолец М. Касторов колхознике, Г. Симбирски—Г. Иванова, М. Михайлăв комсомолец В. Петров комсомолеца т. ыт. йулташсене те чĕнчĕç.

— Епĕ империалисăмлă вăрçăра Германи çĕрне тыткăна лекрĕм. Капиталиссем пире уй чӳхве хытă асаплантарчĕç. Выçă усратчĕç. Йалан хĕнетчĕç. Вăрçă мĕнлине лайăх чухларăм епĕ. Манăн текех уй пек вуша курас килмест. Ирĕклĕ, савăнăçлă, телейлĕ пурнăçпа пурăнас килет манăн. Çавăнпа та епĕ государствăна ирĕклĕн 150 килограм тырă сутатăп,—терĕ комбайнер Андрей Иванов йулташ. Вăл Маркăв йулташа хăй пекех сутма чĕнчĕ.

Государствăна тырă сутасси анлăн сарăлса кайнипе, колхозниксен пухăвĕнчех ик—виç сехет хушшинче 21 колхозник 22 центнĕр тырă сутрĕç. Вĕсенчен П. Николайĕв, Н. Алексейĕв, З. Маргинов, И. Иванов, А. Иванов колхозниксем 150 шар килограм сутрĕç.

Г. Марушĕв.

Ăнлантарса пар аççĕ

ЙĔТЕРНЕ. Чурпай колхозĕнчи комсомолецсем массă хушшинче ăнлантарулă ĕçсене лайăх туса пыраççĕ. Комсомолецсем Сергейĕвпа Йершов йулташсем халăха йаланах хаçатсем çинчи çĕнĕ хыпарсене вуласа параççĕ, партипе правительствăн постановленисене ăнлантараççĕ.

А. Краснов.

Карл Маркс урамĕнче 24 хватерлĕ çĕнĕ çурт тăваççĕ (Шупашкар). ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: стаханăвçсем Н. Ушаковпа Т. Сергейĕва раствор пушатаççĕ, нормăна 200—225 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

ТӲРЛЕТНИ

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче пичетленнĕ номĕрĕнче Октябĕр революцийĕ XXI çул тултарни çинчен В. М. Молатăв йулташ тунă докладăн „III. Пирĕн задачсем" йатлă пайри 5-мĕш абзаца çапла вуламала:

„Анчах та Сталин йулташ иртнĕ çул Тĕпкомăн февраль-мартри пленумĕнче капиталисăмлă йĕритавралăх çинчен,—вăл йĕритавралăхра епĕр пурăнатпăр тата социалисăмлă государствă аталанса пырать,—тата вăл (капиталисăмлă йĕритавралăх) Совет Сойузĕпе тăшманла хутшăнса тăни çинчен ыйтăва пĕтĕм пысăккăшĕпе лартни питех те тĕрĕс пулнă".

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТĂН СНАБЖЕНИ ПАЙĔ

краскăсем, тимĕр, тимĕр-тăварсем, фарфăртан тунă шултра роликсем, хулăм тата пĕчĕк виçелĕ кантăк, тарă

СУТАТ

Адрĕс: Ленинградская, 28.
Кашни кунах кăнтăрла 12 сехетрен пуçласа ыйтса пĕлме пулать.

5—2

АВТОХУÇАЛĂХСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Горючие сĕрмели материалсем илмели талонсемпе тата нарйадсемпе (йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа октябĕре çитиччен штамп пуснăскерсемпе) усă курса пĕтермен пулсан, вĕсем тăрăх расчот тума çав талонсемпе нарйадсене 1938 çулти декабĕрĕн 1 мĕшĕнчен Росснабсбыт Чăваш уйрăмĕн Транспăрт кантурне тăратмала, çак срук хыççăн тӳлесси çинчен претензисем йышăнмаççĕ.

Чăвашросснабсбыт.

3—1

Чăвашсойузăн Шупашкарти квас тăвакан предприйатине

БУХГАЛТĔР КИРЛĔ

Конторăра ыйтса пĕлмеле.
Адрес: г. Чебоксары, ул. Ленинградская, 29.

РАДИО ĔÇĔНЧЕ ĔÇЛЕКЕНСЕНЕ ТАТА РАДИО ИТЛЕКЕНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Кăçалхи декабĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Чăвашсен Радио Комитечĕ РВ—74 станци урлă çак вăхăтсенче (Мускав вăхăчĕпе) вешчани парать:

Кашни кунах

7.25—7.48 Республикăри хаçатсен обзорĕ. Радиоработниксем валли инструктаж тата радио итлекенсен çырăвĕсем çине ответ парасси. (Малтанхи кунсенче).

Кашни кунах, канмали кунсемсĕр пуçне

15.15—15.28 Радиоувĕлсен трансляци программи. Информацисем тата пĕлтерӳсем.
15.30—15.58 Пайан тухнă хаçатсенчен илнĕ статйасем тата ТАСС пĕлтерĕвĕсем.
16.00—16.29 Концерт.
16.30—16.45 Йулашки хыпарсем.
17.00—17.28 Ачасен передачи (нечотнăй числасенче).
18.15—18.30 Йулашки хыпарсем.
19.30—19.59 Агитаципе пропагандă çектăрĕн передачи (ултăкунлăхăн пилĕкмĕш кунĕсĕр пуçне).

Кунсăр пуçне ултăкунлăхăн 1-мĕш кунĕнче

20.30—20.58 Литературă передачи

Ултăкунлăхăн 4-мĕш кунĕнче

21.00—21.58 Литературă передачи.
22.00—22.58 Концерт.

Канмали кунсенче

18.15—18.43 Литературă передачи.
18.45—9.25 Художествăллă пултарулăх концерчĕ.

Мĕнпур узелсем ытти вăхăтсенче Коминтерн йачĕпе тăракан РВ—1 станцине трансляци тумала (ултăкунлăхăн 3-мĕш кунĕнче 20 сехетрен пуçласа ВЦСПС РВ—49 станцине трансляци тăваççĕ).

Чăвашрадиокомитет.

ХАÇАТ-ЖУРНАЛСЕНЕ 1939 ÇУЛШĂН ÇЫРĂНТАРМА ПУÇЛАНĂ

Республикăра тухса тăракан хаçатсемпе журналсене мĕн чухлĕ кирлĕ таран çырăнма пулать.

Хаçатсемпе журналсен йачĕсем	Мĕнле чĕлхепе тухать	Çырăнса илмели хакĕ: 1 уйăха	3 уйăха	6 уйăха	Çулталăка
Хаçатсем:					
„Красная Чувашия"	Вырăсла	2—50	7—50	15—00	30—00
„Чăваш Коммунĕ"	Чăвашла	2—50	7—50	15—00	30—00
„Çамрăк большевик"	„	60	1—80	3—60	7—20
„Пионер сасси"	Чăвашла тата вырăсла	25	75	1—50	3—00
„Стаханăвла хăвăртлăхшăн"	Чăвашла тата вырăсла	50	1—50	3—00	6—00
Журналсем:					
„Ленин çулĕпе"	Чăвашла	50	1—50	3—00	6—00
„Ĕçхĕрарăмĕ"	„	50	1—50	3—00	6—00
„Сунтал"	„	1—00	3—00	6—00	12—00
„Капкăн"	„	40	1—20	2—40	4—80
„Хатĕр пул"	„	30	90	1—80	3—60

ПОДПИСКĂНА сойузпичет, почтă, почтальонсем, хаçат çыrăнассине организацилекенсем, предприйатисенчи, учреждениссенчи, МТС-сенчи, совхозсенчи тата колхозсенчи пичет саракан ответлă çынсем илеççĕ.

Шупашкарта хаçатсемпе журналсене кашни уйăхăн 29-мĕш числиччен, районсенче 27-мĕш числаччен çырăнма пулать.

ПОДПИСКĂНА ÇАК АДРĔСПА ЙАМАЛА: Город Чебоксары, ЧАССР, Дом связи, подписная контора „Союзпечать".

Çыхăну управленин „Сойузпичечĕ".

Петр Анисимăвич Моисейенко

(Вилнĕренпе 15 çул тулнă тĕле)

Иртнĕ ĕмĕрĕн сакăрвуннăмĕш çулĕсем. Роççийăра рабочисен йухăмĕ тăвăллăн ӳсет. Пĕр стачка хыççăн тепри пулать, вăл стачкăсене хутшăнакан çынсен йышĕ ытларах та ытларах ӳссе пырать. Революцилĕ хускалу вырăс пролетариачĕн çĕнĕрен çĕнĕ сийĕсене, çĕршыври çĕнĕ районсем çине сарăлса пырать.

„Революцилĕ йухăмăн историнче 1885 çулта Орехово-Зуйĕвăра Морозăв хапрăкĕнче пулнă пысăк стачкă уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Çак хапрăкра 8 пине йахăн рабочи ĕçленĕ. Еç условийĕсем кунран кунах начарланса пынă. 1882 çултан пуçласа 1884 çула çите ĕç укçине пилĕк хут чакарнă, çитменнине 1884 çулта ĕç хакне тӳрех пĕр чĕрĕк чухлĕ, урăхла каласан, 25 процент чухлĕ чакарнă. Анчах кунсăр пуçне тата фабрикант Морозăв рабочисене штрафсемпе асаплантарса çитернĕ. Стачкă хыççăн судра çакă палăрнă: штрафсен ӳтĕмĕме рабочирен ĕçлесе илнĕ кашни пĕр тенкĕ пуçне фабрикант валли 30 пусран 50 пус таран тыта-тыта йулнă. Çакăн пек çаратнине рабочисем тӳсме пултарайман, 1885 çулти йанварте вара стачкă пуçласа йанă. Стачкă тăвассине малтанах организациленĕ. Ăна малта пыракан рабочи Петр Моисейенко йертсе пынă, вăл унччен „Северный союз русских рабочих" членĕ пулнă, унăн йĕтĕ революцилĕ опыт та пулнă. Стачкă тăвас умĕн Моисейенко ытти ăнланулăрах ткачсемпе пĕрле фабрикант умне требованисем кăларса тăратма хатĕрленĕ, вĕсене рабочисен вăрттăн канашлăвĕнче çирĕплетнĕ. Пуринчен малтан рабочисем вăрă-хурахла штрафсене пĕтерсе лартма ыйтнă.

Çак стачкăна хĕçпăшаллă вăйпа путарса лартнă. Рабочисене 600 çын ытла арĕсленĕ, вĕсенчен темиçе вуна çынна суда панă". („ПСК)П Историйĕ", стр. 9—10).

Паллах, Морозăв хапрăкĕнчи стачкăн организатăрне Петр Моисейенкона та судпа айăпланă. Репрессисем хыççăн репрессисем пулса пынă. Анчах хăраса ӳкнĕ самодержавин ирĕксĕрех чакмала пулнă, вăл саккун кăларнă, çав саккун тăрăх, штрафсемпе пухăннă укçа-тенкĕ фабрикант кĕсйине мар, рабочисен хăйсен нушисем валли каймала пулнă.

„Морозăв хапрăкĕнчи тата ытти стачкăсен опычĕ тăрăх, рабочисем организациленсе кĕрешнипе вĕсем нумай çĕнсе илме пултарассине ăнланса илнĕ". („ПСК(б)П Историйĕ", стр. 10).

Петр Моисейенко виçĕ революцийе курнă, çав революцисене хутшăнса кĕрешнĕ çын.—унăн йачĕ Роççийăри рабочисен организацилĕ йухăмĕ çуралса аталанса пынă тапхăрпа уйăрăлми çыхăнса тăрать.

Вăл хăйĕн пролетари пурнăçне вунвиçĕ çултах пуçланă. Рабочисене пусмăрласа мăшкăлаҹи, хуçасен чарусăр та киревсĕр ĕçĕсем çамрăкăн чĕринче таран йĕр хăварнă. Експлоатацин етемле мар режимне хирĕç протеслес кăмăл унăн пĕтĕм чĕрине йарса илнĕ.

Орехово-Зуйĕвăри пиравăр хапрăкĕсенчен пĕринче ткач пулса ĕçленĕ вăхăтра, Моисейенко народниксем вăрттăн кăларнă литературăпа паллашнă. Часах унăн кăмăлĕ Петербурга туртăнма пуçланă. Унта Петр Моисейенко паллă революционерсемпе тĕл пулнă. 22 çулти рабочи-ткача самодержавине хирĕç пыракан кĕрешӳ идейисем йарса илнĕ.

„Северный союз русских рабочих" йатлă организацийе (вăл хăйĕн программи тăрăх Хĕвеланăçĕнчи социал-демократла рабочисем патне çывăх пулнă) тунă çĕре хутшăнса ĕçлесе, Моисейенко çав организацин пулас руководителĕсемпе—Обнорский слесăрпа тата Халтурин стольарпа паллашнă.

1883 çулта Петр Моисейенко Орехово-Зуйĕвăна тепĕр хут пынă. Вăл Морозăв хапрăкне ĕçлеме кĕнĕ, унăн çакăн хыççăнхи пĕтĕм ĕçĕ унти стачкăна—Роççийăри мухтавлă рабочи класăн геройла историне кĕнĕ стачкăна организацилессипе, ăна ирттерессипе çыхăнса тăнă.

Морозăв хапрăкĕнчи стачкăна хутшăннă çынсене арĕслесе суд тунă хыççăн, патша тарçисем Петр Моисейенкона Архангельск губернине пурăнмалах ссылкăна йанă.

Ачаранах йăвăр ĕçпе асапланса пĕтнĕскер, полици хĕсĕрленипе, нумай çул хушши патша казамачĕсенче ларса, ссылкăра пулса халран кайнăскер,—Петр Моисейенко çапах та революцилĕ хĕçпăшала алăран пăрахман. 1916 çулта Горловкăри рабочисен вăл организациленĕ забастовки сиксе тухнă. Моисейенко Кавказа тарать, унта вара, самодержавине сирпĕтсе антарни çинчен малтанхи хыпарсем çитиччен, патша жандармĕсенчен пытанса пурăнать.

1918 çулта Петр Анисимăвич Моисейенко,—унчух вăл 66 çула кайнă пулнă,—Хĕрлĕ Çарта ĕçлеме пуçланă. Вăл большевиксен партине кĕнĕ: ĕçхалăх массисен социалисăмшăн пыракан кĕрешĕвĕнче большевикла парти вĕсен хăватлă организатăрĕ тата çулпуçĕ пулса тăнине Моисейенко лайăх пĕлсе тăнă.

Совет çĕршывĕн ырлăхĕшĕн пулса пыракан творчествăлă ĕçрен вăй, паттăрлăх илсе, Петр Анисимăвич Моисейенко тата пилĕк çул пурăннă.

1921—22 çулсенче, пирĕн çĕршыври геройла рабочи клас Аслă Октябĕрччен мĕнле пурăнни, мĕнле кĕрешни çинчен çамрăк ăрăва каласа пама тивĕçлĕ документсемпе материалсене пухса йĕркелес тĕлĕшпе вăл хастарлансах ĕçленĕ.

Петр Анисимăвич Моисейенко 15 çул кайала, 71 çула çитсен, 1923 çулти нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче вилнĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 544 Гор. Чебоксары, типографии № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № 832 ф 6.4×84 п. л.